30-79 834 183



К. В. Иванов

# НАРСПИ



СССР-ти ХАЛӐХСЕН
ТӖП ИСТАТТӖЛСТВА
МУСКАВ ★ 193

К. ИВАНОВ

# НАРСПИ

4-мӗш ХУТ ТУХАЙ

Кӗнеке хуппипе кӗнекери ӳкерҫӗксене
МЕҪНИККОВ тунӑ.

СССР-ти Халӑхсен Тӗп Истаттӗлстви
Мускав * 1930

Главлит № А 65.556 Заказ 527 Тираж 5000.

Кн. ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва, Шлюз. наб., 10



К. В. Иванов.

# „НАРСПИ“

(Умсăмах вырăнне)

## ПĔР-ИК СĂМАХ К. В. ИВАНОВ ПУРНĂÇĔНҪЕН

Константин Ваççилҫҫă Иванов ҫăвашсен малтанхи ҫаплă поеҫĕ, ҫавашăн илемлĕ литтерагтурĕн никĕсне хуракансенҫен пĕри. Вăл Ĕпхӳ кĕпĕрнинҫе, халҫхи Пушкăрт Респуплĕкĕнҫе, Пелепей канттонĕнҫе, Слакпуç йатлă йалта, 1890 çулта çурлалнă.

Унăн ашшĕ-амăшĕсем йалта пуйан çынсем пулнă, ашшĕне „пуйан Ваçли“ тесе ҫĕннĕ. Пуйан Ваçли пушкăрт хирĕсенҫи çĕрсене, Слакпуçĕнҫен 40 çухрăм таран айакка кайса, тара илсе акса мул пухнă, хăш çулне вăл 50 теçеттинтан та ытла акнă. Конст. Ваç. каланă тăрăх 120 теçеттина та çитнĕ. Паллах, çавăн ҫухлĕ çĕре вăл хăй çемйипе кăна пухса тăма пултарайман, ăна акса пуçтарма тара та тытнă, йе ани çинҫи тыррине те, хăш ҫух акман анине те усламла сутнă. Тырă (Слакпуç çынĕсем калани тăрăх) вăл

вакунĕ-вакунĕпе те йанă. Çавăн пек пуйан сынна ывăлĕсене, хĕрĕсене хут вĕрентме нимĕн те тăман, çавăнпа та унăн аҫи-пăҫи сырăва вĕренменни çук. К. В. аслă ывăлĕ пулнă, вăл вĕренме кайма пуçланă вăхăтра ашшĕ вăл терийех пуйан пулман, анҫах хăй сырăва пĕлни, тата шкул хăй çуртĕнҫен инçе марри— аслă ывăлне вĕрентме пулăшнах çав.

Йалĕнҫи шкулта вĕренсе тухсан, К. В. Ҫĕмпĕрти ҫăваш шкулне кайса кĕнĕ. Вăл унта 1904-мĕш çулта хатĕрленмелли класа кĕнĕ, тепĕр çулне—1905-мĕш çулхи кĕркунне, пĕрремĕш класа куçнă.

1905-мĕш çул—вăл револуутси йухăмĕ вăйлăланса çитнĕ çул. Астăватăп, епир, шкулти вĕренекенсем, октăпĕрен 17-мĕшĕнҫе Ҫĕмпĕрти сопора кĕшĕлтетсе кайнине. Унта пире манифес итлеме илсе карĕç, йертсе кайакан уҫиттĕлсем манифеса хавас турĕç пулас та пире те револуутси çинҫен тăнлантаркаларĕç, кайран правиттĕлствă ҫака пуçласан тутисене мăрт! сыртрĕç, пирĕнне те çăварлăхлама тăрăшрĕç.

Ку тапхăр ун ҫухнехи вĕренекенсен сăнсăпатне нумай улăштарҫĕ, ăсĕ-хапăлĕсене револуутсиллĕ шухăшпа ерешлентерҫĕ, хĕрлĕ йалавсем мĕне пĕлтернине, рапоҫҫисен мĕнле ыйтусем пуррине тата патша мĕнле йун йуратнине те лайăх ҫухласа илҫĕç. Кĕçтук (çапла К. В. клаора ҫĕнеҫҫĕç) та ытти аҫасенҫен

айакра тăрса йулман, вăл та çав сылăшпах сывланă. Вăл хăйне пастовккă вăхăтĕнҫе кăтартмарĕ, анҫах çапах та пĕрре хăйĕн таланҫĕ тивлетне пастовккă ĕçĕшĕн парне кӳнине каламасăр иртес мар.

Ĕç çапла пулҫĕ. Епир, пĕрремĕш класрисем, 1905-мĕш çулти нойапĕрте аслă класрисем пастовккă тунă ҫух, вăл пастовкка çыпăçаймасăрах йултăмăр, унпăн тепĕр çулне, 1906-мĕш çулхи раштавра, пастовкка хатĕрленме тапратрăмăр. 1907-мĕш çулхи йанварăн 10-мĕшĕнҫе, пур аҫасем те раштаври каникултан таврăнсан, вырăс преппотаваттĕле — Тим. Ив. Коҫҫурова — хамăр патран хуса йамалла тесе йышăнтăмăр та, инспектăра ун çинҫен хут (петтитси) çырса патăмăр. Ун ҫухне И. Йаккăлҫҫă 60 çула çитнĕ, хайар сăнлă инспектăрҫҫĕ, класа çут тумтирлĕ хурмăпа пырса кĕрсе пире ӳкĕтлесе те, хăтăрса та пăхрĕ, анҫах епир ăна итлемерĕмĕр те, пăхăнмарăмăр та. Вара Т. И. Коҫҫуров хăй пырса, пирĕн умра куççӳлне йухтарса ӳкĕнме те, ӳпкелеме те тытăнҫĕ. Епир ăна „ҫăвашсенҫен мăшкăлать“ тесе çырнăшăн вăл пит пăшăрханнă имĕш, çавăнпа çапла каласа хуҫĕ: „у меня самые закадычные друзья—чуваши“, терĕ. Кĕçтук, Коҫҫуров тухса кайнă кайман, класри тоска çине, пыл катки сăнне турĕ те икĕ йенне Коҫҫуровпа Василий Никифоров йатлă пупа (ҫăвашран тухнăскерне) туса

тăратрĕ, айпе „друзья за кадушкой“ тесе çырса хуҫĕ.

Çав ӳкерҫĕк пурин кăмăлне те кайрĕ, пусăрăннă шухăшсене çĕклерĕ, ҫĕлхе-çăвара çивĕҫлерĕ. Кĕçтук талантне унҫҫенех палăртма пуçланăҫҫĕ, анҫах çакă унăн паллă моментри сăнлăх, ман шухăшпа. Пастовккă пирĕн натсионалисăм шăршиллĕҫҫĕ, анҫах вăл хаҫхи натсионалисăмран уйрăмрах, вăл вăхăтра ăна „сеппараттисăмпа“ хутăштарнă, вăл „монархисăмпа“ „империалисăма“ хирĕçле пынипе револютсиллĕ вăй пулнă, анҫах тӳрĕ çул çинҫе тăнă теме çук. Вăл тӳрĕ çул çинҫе тăманни çакăнтан та курăнаť: епир хамăра хамăр „иноротсы“ тесе мĕскĕне хуни клас тĕлĕшĕнҫен „иноротсы“ хушшинҫи пуршуйсене ĕççыннипе пĕр тан шутлапине пĕлтерет. Пирĕн малтанхи пастовккă 10 куна пыҫĕ, Коҫҫуров вырăнне ҫăвашран тухнă В. Ф. Фетоттăва паҫĕç те епир пастовккă тума ҫарăнтăмăр.

Вăл çул февралĕн 20-мĕш ҫислинҫе Иккĕмĕш Патшалăх пуххи уçăлҫĕ. Епир çав куна хисеплесе хамăрăн пастовккăллă ыйтăва пысăклатса тепĕр хут пĕр кун хушши политтĕкла пастовккă турăмăр. Шкул пуçлăхĕ И. И. Йаккăвлĕв пурăннă çурт тӳпи çине хĕрлĕ йалав çакрăмăр. Ҫĕмпĕрти кĕпĕрнаттăр çавна пĕлнĕ хыççăн йалав çакакана туптарса шкултан кăларттарса йартарҫĕ.Вара çав аҫана, М. Кириллăва (кайран Т. Никколайĕва (Хури) Ху-

санта тытса паракана) кăларса йанăшăн епир тепĕр хут пастовккă турăмăр та пире мартăн 7-мĕшĕнђе шкултан хуса кăларса йађĕç. Çапла пирĕн 1-мĕш клас йалсене саланђĕ, пире ытти шкулсене кĕмелле мар туса хӳђĕç.

Кĕçтук та хăйсен йалне Слакпуçне кайрĕ. Кунта çуркунне вăл илемлĕ вырăнсемпе паллашса хăйĕн ђевђен ђунне пусарнă пулас. Кăçал епĕ йурийех вăл çуралнă йала кайса пăхрăм, Кĕçтук виллин тăпри çине те пырса куртăм. Вăл ђаххуткăна кайса 1915-мĕш çулта май уйăхĕнђе вилнĕ. Талантлă поет пурăннă пулсан нумай пире хăйĕн сăввисемпе киллентернĕ пулĕђђĕ. Поеçисĕр пуçне, паçăр асăнтăм-ха, вăл хутошĕствăпа та интересленеђђĕ, хăй те ђиперех, ђĕрĕ пекех çын сăнĕсене ӳкеређъĕ. Ђĕмпĕр шкулĕнђе вăл ӳкерсе хăварнă стођар Никколай Никканорђђă сăнĕ халĕ те ђĕрĕ пекех çакăнса тăрать, теççĕ. Вăл 1910-мĕш çултан пуçласа 1915-мĕш çулђен Ђĕмлĕр шкулĕнђе ӳкерђĕксем тума вĕрентсе пурăннă. Ун çине И. Иаккăлђђă, ђĕлхе ăсти тесе, урăх ĕççем те купаланă: ăна „Пиплин“ „Песня песней“ йатлă пайне куçарттарнă, теççĕ. Ку ĕç ăна, пађар сывлăхласкерне, питех те пусарса çитернĕ, унăн хăватсăр ирĕкне те хытă пӳлнĕ: вăл çемçерех кăмăллă пирки те пулас, ĕçке те хыт сыпăçса кайнăђђĕ. Унăн ђаххутки те Поруђиккăв йатлă

тусĕн туйĕнҫен кайран вăйланса ăна вырăн ҫине персе антарнă, тет амăшĕ.

Кĕҫтук ҫуралса ўснĕ йал тавра пит илемлĕ уйхирсем, вăрмансем, ҫуллă сăртсем, шăнкăртатса выртакан шывсем пур. Йал ҫумĕнҫи сăрт ҫине улăхса тăрсан кăнтăр йенелле пушкăртсен ҫеҫен хирĕсем тăсăлса вырт̆аҫҫĕ, хĕвел тухăҫ йенелли вăрман хыҫĕнҫе, виҫĕ ҫухрăмра, Силпи йатлă йал вырăнĕ астарса ҫĕнет.

„Пуш уйăхăн вĕҫĕнҫе
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи ҫăваш йалĕнҫе
Йур ирĕлҫĕ васкаса. („Нарспи“).

Халĕ „Силпи“ йенеллех „Канаш“ йатлă колхос Слакпуҫĕнҫен тухса ларнă. „Канаш“ Слакшывĕ шăнкăртатса выртакан вырăнăн икĕ йеннеле ларса тухнă: кунта ҫухăнпа вăтам хресҫенсем ушкăнлă хуҫалăх никĕсне хывнă.

Илемлĕ вăрмансем, ҫуна ҫемҫетсе куҫа аҫашлакан вырăнсем авăн ҫапакан машшин сассипе йантраса Михетерĕн ҫĕрсе выртнă мулĕ вырăнне, хулари вăй—интустри пырса кĕнине пĕлтереҫҫĕ, ҫĕнĕ сывлăшпа ҫуна уҫаҫҫĕ. Кĕҫтук пурăннă пулсан ку ҫĕнĕ вăйа та илемлетпе ўкерне пулĕҫҫĕ. Ку вăй Михетерпе Нарспи вăхăтĕнҫи вăйран—„мулшăн сынна ҫинĕ“ вăхăтри саманаран тĕпиипех урăхла, куна такамăн та пĕлмелле. Авалхи киревсĕр

самана кайа йултăр та салантăрҫҫĕ ҫасрах, вăл сотсиалисăм ҫулĕ ҫинҫе ҫăрмав кăна, ҫапах та ун ҫинҫен пĕлни пирĕншĕн пит кирлĕ. Мĕнле шухăшсем (итейсем), етемсен сăнсăпаҫĕсем, пурнăҫ мĕлкисем улшăннине курас тесен, авал ҫине ҫаврăнса пăхмаллаха.

Аваллăха кăтартса паллаштарас тĕлĕшрен „Нарспи“ пит паха илемлĕ пасма, ăна пĕлни никампăн та иккĕленмелли шухăшлă пулмалла мар.

Анҫах ăна вуланипе „натсионалисăмлă“ шухăш кăларăт пулсан—вăл сийен вара, унпа пирĕн ҫине тăрсах кĕрешес пулаť. Ку тĕлĕшрен Хусанкай пек:

„Уйава йут такмаксем кĕреҫҫĕ,
Ват анне пăрахнă сурпана.
Мĕн тăвăпăр халĕ, мĕн тăвăпăр?..
Сетнерпе Нарспин ĕмри иртет,
Хĕвеле те ҫимĕ ĕнтĕ вăпăр,

Сухапуҫ те ватăлҫĕ хирте...“ тени ниме йурăхсăр, кайалла туртакан кĕвĕ пулаť. Сетнер пек имшеркке ҫунлă етемсем хаҫхи саманари керойсем пулма пултараймаҫҫĕ. „Нарспи“ ҫинҫен криттĕксем ҫыркаланă та, ҫапах та питех тишкерўпе урлă пирлĕ тухман. „Умсăмахра“ тишкерў манăн та питех тĕплĕ пулаймĕ, ҫапах „Нарспийе“ кăшт вакласа илес пулатех.

## „НАРСПИРИ“ САН-САПАТСЕМ

Тишкерӳ ҫине куҫаҫҫен Кĕҫтук „Нарспийе“ йепле ҫырма пуҫлани ҫинҫен каласа парас пулат.

Ҫĕмпĕрти шкултан кăларса йарсан кĕркунне Кĕҫтук Ҫĕмпĕрех „кĕнекесем куҫаракан комиҫҫийе“ ĕҫлеме тесе пырса кĕнĕ. Вăл унта О. П. йатлă йулташпа пурăнат тенине илтсен, епĕ те Ҫĕмпĕре йур ҫăвас умĕн пăрахутпа пырса кĕтĕм.

Кĕнеке куҫарас вырăнне епир сăвăсем ҫырма тытăнтăмăр. И. Й. пирĕн сăвăсене курҫĕ те мухтанă пекки турĕ. Хăй Лермăнттăва пит кăмăл тунă пирки, вăл пире Лермăнттăвăн сăввисене куҫарма хушрĕ. Ҫапла вара Кĕҫтук „Калашник хуҫапа Иван ĕмпӳ“ ҫинҫен ҫырнă йурра куҫарҫĕ, ун ҫумне тата пĕҫĕкреххисене иксĕмĕр пĕрле куҫарса, пĕр пĕҫĕк кĕнеке туса 1908-мĕш ҫулхи ҫуркунне патнелле кăларттартăмăр.

Лермăнттăвăн происветенисенҫе туллийех интивитуалисăм, унăн хăйсемшĕн кăна ҫапăҫакан керойсем пит паттăр, ҫав вăхăтрах пурнăҫ ҫине салхуллă пăхаҫҫĕ, мĕншĕн тесен, вĕсене пĕтерекен „фатталисăм“ („турă ҫырнинҫен иртмелле мар“ текен шухăш) хупласа тăрат, вĕсем ҫинҫе вилĕм хĕҫҫи ҫакăнса тăрса вĕсене пурнăҫшăн йурăхсăр тăват. Ҫав фатталисăм ҫăвашсен авалхи тĕнĕпе те,

ытти тĕшмĕшлĕ шухăшсемпе те пит варлăшма пултарать, хăш тĕттĕм ҫăваш пуҫне питех те ҫавăрать.

Епир пурăннă вăхăтра Ҫĕмпĕрти шкулта, пирĕнпе пĕрле пĕр Иван йатлă (епир ăна „Ҫалтун“ тесе ҫĕнеттĕмĕр) сторош пурăнаҫҫĕ. Ҫав Иван „Калашник йуррине“ итленĕ хыҫҫăн пĕр халлап каласа паҫĕ. Вăл халлапра Нарспи йатлă хĕр хăй савнине турă ҫырман пирки каҫҫа кайайманни ҫинҫен хурланса каланă вырăнсем пурҫҫĕ.

Акă ĕнтĕ „Нарспи“ сиксе тухнă ҫăл куҫĕ. Вăл пĕр йенҫен ҫăвашăн авалхи тĕттĕм пурнăҫĕнҫен тухнăскер, тепĕр йенҫен ăна йĕркелесе пырса тумлантарнă ҫух—вырăссен ҫаплă поеҫĕ Лермăнттăв ўкерҫĕк пек курăнса тăнă. Кунта потрашани (ҫын ҫырнине майлă ҫырни) мар, кунта Кĕҫтукăн тĕп шухăш сăнĕсем пĕр йĕрпе куҫнă теме анҫах йурать.

Кĕҫтук ҫырасса та „Нарспийе“ варринҫен ҫырма пусларĕ. Иван ĕмпў ĕҫкĕ туни ҫинҫен „Калашник“ йурринҫе пуҫланнă пек вăл та малтан „Туй“ йатлă пайне ҫырнăҫҫĕ; кайран пайăн-пайăн ҫырса вăл „Нарспийе“ хаҫхи еăна кўртсе пиҫетлеттерҫĕ. Пиҫетлеттерес умĕн И. Й. та нумай пулăшрĕ, вăл вуланă ҫух тўрлетсех памасăҫĕ те, йурăхсăр курăннине йусама хушаҫҫĕ. Кунта пĕр ватă ҫын Ф. Т. кăштах ҫăрмав туни ҫинҫен ка-

ласа хăвармалла. Вăл сăмаха кĕскетнипе нийепле те килĕшейместҫĕ, ҫавăнпа вара тавлашусем те тухаҫҫĕҫ, пуринҫен ытла вăл вирйал ҫĕлхинҫи кĕскетнĕ сăмахсене кӳртесшĕн марҫҫĕ. „Нарспи“ре вăл питех те паллă мар, Кĕҫтук хăйĕн сăввисемшĕн хытă тăраҫҫĕ, ҫапах та вăл кĕскетнине те тăсса ҫырнисем пур. Акă ун пек вырăнсем:

Кĕҫтук ҫырнă малтан:

„Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăран
Каҫҫу ытла вată-им?“

Ф. Т. тӳрлетсе ҫыртарнă:

„Мĕншĕн Нарспи хуйхăратăн?“

Тата Кĕҫтук ҫырнă:

„Мĕншĕн шăй-шăй шăхăрса
Мĕскĕн ҫуна хăратап?
Ах, ман хуйхăм, итле-ха:
Мĕншĕн мана ҫунтаран?“
Мĕншĕн мана тăлăха
Савăнăҫа мантаран?“

Ф. Т, тӳрлетнине кĕнеке ҫине хутшăнса ҫапăнна: „хăрататăн“, „ҫунтаратăн“, „мантаратăн“ сăмахсем ритмăна пăсаҫҫĕ. Ку ҫĕлхе тӳрлĕхне кӳнĕ парне пулса тăнă, халĕ ун пеккине тӳрлетсен те йурат, анҫах Ҫĕмпĕртри ӳкерҫĕке пăсас мар тесен, ҫаплипех хăварма та йурат.

Нарспи авалхи пурнăçран, ȶăвашсем çырăва пĕлмен, тĕшмĕше, йумăçа, вĕрÿçе ĕненнĕ вăхăтсенȶен илсе çырнă йапала. Ку поемăра автăр пуйан çынсен пурнăçне, çав вăхăтрах ȶухăнсен пурнăçне те кăтартма тăрăшнă, çапах та авалхи ĕмĕре пур йенȶен те илсе кăтартайман. Пуринȶен ытла происвотствă йенȶен кăтартни курăнмасť, ку Кĕçтук çамрăк пирки ăна пĕлейменнине кăтартаť. Поемăра Михетер пуйанне ун çурȶĕсем, выȡăх-ȶĕрлĕхĕ çинȶен çырнинȶен пĕлетпĕр, анȶах ĕç тăвас пулсан:

„Сиплет тулта Михетер
Туй кÿммине пĕȶȶенех“.

Ăçта пулнă унăн çиȶĕ тарçи-тĕрçи? Вĕсене вăл кайри сыпăкра кăна пĕр йĕркепе асăнса илет:

„Çиȶĕ тарçă-тĕрçине
Ерех парса ÿсĕртнĕ“...

Нарспи каȶȶи Тăхтаман пуйан тенĕ, анȶах унăн пуйанлăхĕ ниçта та курăнмасť, вăл хăй суха туса ывăнса, выçăхса килет те тÿрех йашка патне аллине кăмсараť. Капла çырнипе ȶăвашсен авалхи пуйанĕсем хăйсем ĕçлесе пурлăх тунă пулмалла тесе шухăшлаттараť, анȶах вăл пит йунăш, ăна ватă çынсенȶен ыйтсан та пĕлмелле. Вĕсем те—йепле авалхи пуйансем тарçă-тĕрçĕсемпе

усӑ курнине, уйри тырӑ-пуллисене тара тытса, йе ниме пухса пуҫтартгарнине каласа параҫҫӗ. Кӗҫтук ашшӗ те 40—50 теҫеттин таран ҫӗр тара илсе акнӑ вӑхӑтра тарҫӑ-тӗрҫӗсем тытса ӗҫлеттернӗ, тет. (Ун ҫинҫен пӗр тарҫӑ пулнӑ, халӗ колхоҫ ҫленӗ, Кермани вӑрҫинҫе хулсӑр йулнӑ, Караҫ йатлӑскер каласа паҫӗ).

Ҫапах та „Нарспи“ре авалхи ӗмӗрте те йал клас тӗлӗшӗнҫен икке уйрӑлса тӑни курӑнаҭ. Кунта ҫӗрме пуйан Михетер—хытса кайнӑ ҫӗрелл ӗскер малтан хӑй хӗрне пит савса ӳстерет, кайран Нарспи пуйанлӑха пӑхмасӑр упӑшкине наркӑмӑш ҫитерсе вӗлерсен, хӑйӗн савни Сетнер патне тарса пырсан, вӑл хӗрне ӳкӗтленӗ хушӑра ак мӗн калаҭ:

„Аҭа, хӗрӗм, таврӑнар
Шӑтӑк-шатӑк ку пӳртрен,
Тепрер каҫҫӑ тупӑпӑр
Йату ҫӗрсех кайиҫҫен“.

Михетер каллех хӗрне пуйан ҫӗре парасшӑн, хӗрӗ Сетнере кӗрӳ тума ыйтсан, вӑл та, карҫӑкки те хӗрне хӑрта-хӑрта ылханаҫҫӗ, унтан:

„Аҫу килне, ҫимхалӗ,

Хӑвах ҫупса пырӑн-ха“, тет. Ку ӗнтӗ пуйанлӑх тем тума та пултараҭ, тесе старик

ёнениине пĕлтерет. Пуйан çын авалах ĕçлекентен мăшкăланине, ĕçлĕ аларан йĕрĕнсе пăрăннине астутарать,—ак Нарспи амăшĕ мĕн калать:

„Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Ĕçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне“.

Ĕçре хытнă аласем пуйанпа пĕр сĕтел хушшине ларма пултарайманни „Нарспи“ ре пит лайăх курăнать. Автăр ţухăн çынсем майлă хăй кăмăлне йанă, вăл пĕтĕм поемивитĕр çăпнă, анţах ţухăн çынтан тухнă керойĕ—Сетнер имшеркке, хăй ирĕкне кăтартма пултарайман çын пек тухнă. Вăл Нарспийĕ ашшĕ унтан ыйгмасăрах каţţа панине ăна каласа парсан, çавăн пек йурăхсăр йăлапа пĕртте тавлашма шухăшламасть. Нарспи ун çумĕнţе уйрăмах хăйуллăта хастарлă, ĕçе тума тытăнсан вĕçне çитиţţен тума тăрăшать, вăл йурату тĕлĕшĕнţен те малта йертсе пырать. Ак мĕнле вĕсен хушшинţе пулнă калаçу:

„Хушăлкари пуйанпа
Манăн туйа пуçлаççĕ,
Тăшман ытла хайар, тет,
Йепле унтан хăтăлас?“

Анҫах Нарспин ҫакӑн пек ыйтнине хирӗҫ ҫухӑн ҫывнӑн тӑлӑх ҫитӗннӗ аҫи—

„Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ӑҫта кайас, мӗн тавас?“ тесе ыйтсан, иккӗленсе хӑй ҫине хӑй шанманнине кӑтартаӗ; „усал тӗнҫе“ уншӑн мӗн пур ҫӑрмав, унӑн куҫӗ хӑйсен йалне йӗри тавра хупласа тӑракан вӑрмантан айакалла тата ҫутҫанталӑк пуррине курмасӗ, ӑсӗ те ӑна тавҫӑраймасӗ:

„Вӑл тӑшмана пӗтерме
Икӗ вӑйлӑ аллӑм пур,
Анҫах ӑна пӗтерсен
Унтан усал тӗнҫе пур“, тет те хӑй савнинҫен уйралма пикенет:

„Сывӑ пул, еппин, Нарспи,
Ан ман, еппин, мӗскӗне“, тесе лаши ҫине утланаӗ те килнелле вӗҫтерет.

Наҫар, ҫухӑн ҫынсем ҫӑнах та Нарспи пурӑннӑ вӑхӑтра пит те мӗскӗнленме пӑхнӑ, вӗсене пуйан ҫынсем пусмӑрланипе вӗсен хастарлӑхӗ те сӳнсе пынӑ, ҫапах та вӗсем хушшинҫе те патмар хӑйуллӑ ҫынсем пулнӑ. Кӗҫтук вӗсене курман, курма та вӑхӑт сахал пулнӑ, „Нарспийе“ ҫырнӑ ҫух вӑл 18 ҫул пуснӑ анҫах, ҫитменне Йепхӳ кӗпӗрнинҫи ҫухӑн йе наҫартарах пурнакан ҫӑ-

вашсем айакка йе савӑта ӗҫлеме кайма пултарайман, ҫавӑнпа унта пуҫа усакан ҫынсем ҫухӑнсем хушшинҫе пуринҫен ытла.

Кунта тата Кӗҫтук хӑй ҫемҫе кӑмӑллӑ пулнине те манма йурамасть, ҫавӑнпа та унӑн йуратнӑ арҫын типӗ ҫапла хӑйусӑр тухнӑ.

Нарспи хӳхӗм, хитре хӑйуллӑ хӗр, вӑл упӑшкине наркӑмӑш парать пулин те, унӑн сӑнӗ вулаканӑн кӑмӑлне кайать. Нарспи халӗ пурӑнас пулсан упӑшкине те пӑхас ҫук, ашшӗне те итлес ҫук, вӗсенҫен уйрӑлса телекаткӑна ҫырӑнна пулӗҫҫӗ. Вӑл халӗ пулсан, авалхи тӗшмӗше ӗненсе:

„Йӗс хуранта пиҫ йашка,
Ҫав йашкара пиҫ ҫӗлен,
Пиҫ тамӑкра упӑшка“, тесе тӑман пулӗҫҫӗ

Ун вырӑнне вӑл хӗсӗрлесе, хӗнесе пурӑнакан упӑшкине тахҫанах сут аллине тытса панӑ пулӗҫҫӗ. Нарспи халӗ хӗрлӗ тутӑра пуҫ тавра ҫавӑрса ҫыхса вӗҫсе анҫах ҫӳренӗ пулӗҫҫӗ.

Михетер, Нарспи, Сетнер—ак ӗнтӗ ҫаксем поемӑн ҫун-хавалне тытса тӑракан геройсем. Ыттисем, вӗсемпе пӗрлех Тӑхтаман та, пиг шупка сӑнлӑ, питех пуҫра йулмаҫҫӗ, вӗсем ҫинҫен асӑпмасан та йурать. Тата пӗр ҫуна ҫӗклентерсе йаракан пӗҫӗк аҫа, Нарспи пултӑрӗ, Сентти сӑнӗ.

„Сентти килет сиктерсе
Кĕвентине утланса,
Инкĕш патне çĕмĕрсе
Кĕрсе кайрĕ ахăрса“... пуçра нумайççен тухмасăр çӳрет, пулас пурнăç шанççăкне астутарма çырнăн туйăнат.

Фатталисăмпа витĕр çапнăскер „Нарспи“ пит хăрушă „Таватă вилепе“ пĕтет. Йулашки пайĕ мĕн пур кĕввинççен, тĕп шухăшĕнççен тухса тăнă. Поемă урăхла пĕтме те пултарайман, мĕншĕн тесен „Нарспи“ геройĕсем йумăçĕнççен пуçласа Сетнере çитиççенех „пӳлĕх çырни çаплалла“, тесе пурăнаççĕ.

Ак Сетнер ӳпкелешет йепле:
„Çамрăк пуçăм пĕтмĕççĕ,
Мулăм çукки пĕтерççĕ...
. . . . . . . . . . . . . . .
Усал тăшман пĕтĕççĕ,
Турă çырни курăнççĕ“.

Çак шухăша вĕçне çитеççенех канваласа тухнă. Ку тĕлĕшрен поемăн тĕп шухăшĕ йурăхсăр, анççах авалхи пурнăçа вĕренес тĕлĕшрен, пуринççен ытла илемлĕ çырма вĕренес йенççен, Нарспи питĕ те усăллă. Унпала тин çырма тытăнакансен паллашмаллах, анççах геройсен сăн-сăпаççĕсене ӳкерес тĕлĕшрен „Нарспи“ ççăн-ççăн ӳкерççĕк вырăнне халĕ тин пулаймĕ. Поемăна пĕр тикĕс, пĕр

йӗрпе илсе пыни, тата пайӗсене пӗр тан туса пыни автӑрӑн пысӑк талант пулнӑ иккенне пӗлтерессӗ.

Самрӑклах кун пек сырма пултарни Кӗстука ҫаплӑ поетсен ашшӗ вырӑнне ларттарать.

Вӑл-„Нарспире" ҫӑваш пурнӑсне кӑтартнисӗр пусне етемӗн авалтанпа йулнӑ сӗрӗк йӑлине те кӑтартнӑ:

„Хӗртен арӑм пулсассӑн
Ват упӑшка кӱлешет".

Кӱлешесси синҫен Шекспир „Оттелло"-ра сырни пирӗн Кӗстук пусне те пӑхӑнтарнӑҫҫӗ.

Кӱлешес йӗрке ҫӑваш арӑмӗ хушшинҫе халӗ те пӗтмен-ха. Ӗлӗкрех, врӗксӗр каҫҫа панӑ вӑхӑтра, вӑл („тӗшмӗш" теме йурать) тата вӑйларах пулнӑ. Кӗстук кунта ҫӑваш ӗссынни шухӑшне пӗлсе, пуйанлӑх хыссӑн кайнӑ Михетере хирӗс ак мӗнле сырать:

„Тату, ырӑ килӗшсе
Иккӗш пӗрле пурӑнсан,
Сӗр хут ытла телейлӗ
„Йурлӑ" сын та пуйанран", тет.

Ку сӑмахсем авалах йурлӑ санпа пурнӑс йӱссине ҫӑтса курнӑ сын хушшинҫе пулнӑ.

„Нарспийе" тепӗр хут пиҫетлесе кӑларни пирӗн хаҫхи литтераттурӑна малалла кайма пулӑшӗ. Криттӗксен ӑна пит тинкӗрсе тиш-

кӗрме кирлӗ. Тишкӗрӳ Кӗҫтук тăпри ҫинҫе, вăл вилни 15 ҫул тултарнă ҫӗре, илемлӗ ҫе-ҫек пулса шăттăр, хаҫхи ҫыракан поетсем-шӗн ҫун хаваслăхне ҫӗклетсе йаракан вăй пултăр.

Н. Шупуҫҫынни.

## СИЛПИ ЙАЛĔНҪЕ

Пуш уйăхăн вĕҫĕнҫе
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи ҫăваш йалĕнҫе
Йур ирĕлҫĕ васкаса.
Тусем, сăртсем хуп-хура
Йурĕ кайса пĕтнĕрен,
Тухаŧ курăк ҫăп-ҫăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.
Сивĕ хайар хĕл иртет,
Кайаŧ йĕрсе, хурланса;
Сивĕ куҫҫӳлĕпе йĕрет
Иртнĕ куншăн хуйхăрса.
Путăксемпе, варсемпе
Ҫĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анҫах мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕҫем хĕртет.
Хĕл куҫҫӳлĕ шавласа
Йухса карĕ ҫырмара

Ађи-пăђи выљзса,
Ђупса çӳрет урамра.

* *
*

Килђĕ ырă çуркунне,
Килђĕ, йађĕ ăшăтса.
Хĕвел сават̆ тĕнђене,
Хĕл ăйхинђен вăратса.
Тĕттĕм вăрман ђĕрĕлет,
Йешĕл тумтир тăхăнат̆,
Çеçен хир те йешерет,
Илемĕпе мухтанат̆;
Тĕрлĕ-тĕрлĕ ђеђексен
Ырă шăрши сарăлат̆.
Çӳлте пĕлĕт айĕнђе
Тăри йурри илтĕнет,
Çемçе курăк çийĕнђе
Путек-сурăх сиккелет,
Хăй кĕтĕвĕ патĕнђе
Ађа шăхлиђĕ калат̆:
Хырăмĕ пит выçнипе
Силпи йалнелле пăхат̆.

* * *

Силпи йалĕ—пуйан йал,
Лараҫ вăрман ăшĕнҫе.
Кантур пекех ҫурҫĕсем
Ват йăмрасем айĕнҫе,
Йалĕ тавра укăлҫа,
Ҫĕвĕ ҫатан укăлҫа,
Кив капанлă анкарти,
Тĕрлĕ ҫимĕҫлĕ пахҫа;
Аслă урам тăршшĕпе
Хăма витнĕ ҫурҫĕсем,
Урам икĕ айккипе
Йем-йешĕлех саҫĕсем.
Ҫуртсем тавра кил-карти
Ҫул хӳме пек ҫавăрнă.
Сарă хапха килсерен
Ҫĕнтĕрленĕ тăрăллă.
Силпи йалĕ—аслă йал,
Хула тейĕн инҫетрен.
Ахăр кунти ҫăвашсен
Мулĕ пуртăр ҫав вĕсен.

* * *

Çырма йухаҫ кĕрлесе
Аслă йалăн çумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
Выҫаҫ унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнҫе
Кăвак пĕлĕт йавăнаҫ,
Ватă йăмра тайăлса
Тĕсне пăхса савăнаҫ.
Авă кĕпер çийĕнҫе
Старик лараҫ вăлтапа:
Йăпăрт-йăпăрт пуллине
Улталасшăн ăманпа.
Ав аҫасем çӳл йенҫе
Шывра ишсе çӳреççĕ,
Пулă тытан ватгине
Хирĕçтерме пĕлеççĕ.
Акă пĕр çын кĕперпе
Каçса пыраҫ çырмапа;
Çырма урлă каçрĕ те
Кĕрсе карĕ вăрмана.

* * *

Ҫӑтмах пекех туйӑнать
Силпи ҫӑваш йалӗнҫе,
Вӑхӑт иртни сисӗнмест
Савӑнӑҫлӑ кунсенҫе:
Кайӑк йурри, ҫын сасси
Йан-йан йарать таврана:
Ҫуркуннехи хавас йурӑ
Килсе кӗрет хӑлхана.
Урам тӑрӑх ҫыннисем
Улпут пекех утаҫҫӗ.
Пӳрт хыҫӗнҫе шавласа
Аҫи-пӑҫисем выҫаҫҫӗ.
Нӑр пек хитре хӗрӗсем
Акӑшсем пек утаҫҫӗ.
Ҫӑнкӑр-ҫӑнкӑр тенкисем
Йалтӑртатса пыраҫҫӗ.
Ҫӗр ҫӗмрӗлсе каҫҫисем
Ташлаҫ хапха умӗнҫе.
Шурӑнӑҫсем ах, аван
Аслӑ Силпи йалӗнҫе!

* * *

Çакă çутă тĕнҫере
Вăйли çук та етемрен:
Шывсем çинҫе, çĕр çинҫе
Хуçа пулса вăл тăрать.
Анҫах вăйлă етем те
Хăй тĕнҫине пăхăнать.
Укçапала ерехех
Çынна ăсран кăларать.
Аслă калăм ернинҫе
Мĕнле ҫăваш ĕçмен-ши?
Тарăн нӳхреп ăшĕнҫе
Мĕн ҫухлĕ сăра пĕтмен-ши!?
Ĕçнĕ те çав, çинĕ те,
Йĕркипеле сикнĕ те,
Унсăр пуçне йепleлле
Тăвас тетĕн праçнике?
Кун иртнĕçем урамра
Ӳсĕр çынсем нумайрах,
Каç пулнăçем вăрмана
Сасă кайать хытăрах.
Ĕçе-ĕçе каçалла

Ӳсӗр ҫӑваш ывӑнаҫ,
Ҫуркуннехи пылҫӑк та
Канма ҫемҫе туйӑнаҫ.
Выртаҫ ҫӑваш улпут пек,
Шухӑшламасҫ ӑҫтине,
Пӗтӗм урам тӑршшӗне
Кӑшкӑраҫ хӑй йуррине:
Нумай ӗҫле, нумай ҫи,
Хытӑ тарла, хытӑ ӗҫ.
Ерех тесен, ӗҫ ҫынни
Нихӑшӗ те тиркемест;
Вӑхӑҫӗпе ӗҫлӗпӗр,
Вӑхӑҫӗпе ӗҫӗпӗр,
Килте ӗҫме пулмасан,
Кӳршӗ патне кӗрӗпӗр.
Кӳршӗн ӗҫме пулмасан,
Уйранне те ӗҫӗпӗр,
Уйранӗ те пулмасан,
Турӑ парасса кӗтӗпӗр.

* *
*

Калӑм иртет, йур пӗтет,
Ҫурхи суха та ҫитет:

Ђăваш ђасах урăлмасť,
Мухмăр иртсе кайаймасť.
Ёнтĕ ўсĕр ђăвашсем,
Урăр ҫине тăрăр-ха!
Йем-йешĕлех ҫўл тусем,
Шыв та ђакнă ҫырмара.
Ей, пиђђесем, тăрăр-ха,
Урлă-пирлĕ пăхăр-ха:
Ака пуҫне тўрлетес,
Урапуна тирпейлес;
Сивĕ шывпа ҫăвăнсан,
Питне-куҫна тĕс кĕтĕр,
Авантарах апатлан,
Ака тума вăй кĕтĕр.
Кўлес ёнтĕ лашана,
Тухса кайас акана.
Ей, турăҫăм, сывлăх пар,
Акнă тыррăма ăнтар!

## САРĂ ХĔР

Йешĕл курăк хушшинђе
Сап-сарă ђеђек ўсет.
Аслă Силпи йалĕнђе

Нарспи йатлă хĕр ӳсет.
Пиҫĕ-куҫĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă ҫеҫек пек.
Икĕ куҫĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрҫа пек.
Йавăнаҫҫĕ хыҫалта,
Ҫивĕт вĕҫĕ кăтрисем.
Утса-утса пынă ҫух,
Шăнкăртатаҫ тенкисем.
Куҫĕсемпе пăхнă ҫух,
Каҫҫăн ҫĕри ҫĕкленет.
Ҫӳхе тути кулнă ҫух,
Каҫҫă ҫунĕ ҫемҫелет.
Хирти сарă ҫеҫеке
Ăшă куҫпа кам пăхмĕ?
Унпек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каҫҫă йуратмĕ?
Хĕвел анса ларсанах
Питне ҫăваҫ, шăлăнаҫ,
Вăййа тухма шĕлкеме
Кăкăрĕ ҫине ҫакаҫ,
Шăнкăр-шăнкăр теветне
Хулпуҫҫи урлă йараҫ,

Хĕрлĕ пурçăн тутăрне
Хĕрле çавăрса çыхаť.
Вăйăсенҫе ун сасси
Кайăк сасси йевĕрлĕ.
Ахăлтатса кулнă ҫух,
Çирĕп çын ку темелле;
Вăйă саланиҫҫенех
Савăнтараť сассипе.
Ирхи çăлтăр хăпарса
Йăл-йăл кулаť тÿпере.
Хăйĕн ашшĕ килĕнҫе
Нарспи канлĕ çывăраť:
Ырă тĕлĕксем курса
Тĕлĕкре те савăнаť.
Ирех тăраť, тумланаť:
Йе пурçăн çип илет те,
Йурла-йурла тĕрĕ тăваť;
Йе çĕлеме лартаť те,
Çĕвви шăрçа пек пулаť,
Сÿс хÿрелĕ хурçă йытă.
Пĕр кĕрет те, пĕр тухаť;
Йе пир тĕртме лараť те,
Выҫантарат ăсине;

Йе хултăрҫă тытать те,
Ҫипне тирет ҫĕррине;
Йе сак ҫинҫи кушакĕ
Питне ҫăва пуҫласан,
Апат хатĕр хăнашăн,
Алли-ури ҫăмăлран...
Аван иртрĕ пурăнăҫ
Хĕрĕн ҫулĕ тулиҫҫен,
Ашшĕ килне хăтана
Ҫиҫĕ йутран килиҫҫен.

* * *

Нарспи ашшĕ Михетер
Ҫĕрме пуйан пурăнать.
Вăл хăй хĕрне йуратать,
Нарспийĕпе мухтанать:
„Ман хĕр пекки камăн пур?
Кама пӳрнĕ ун пек хĕр?
Пушмак ҫук-и хĕрĕмĕн?
Ҫӳрет-и вăл тенкĕсĕр?
Силпи йалĕ ĕмĕрне
Ун пек хĕрсем курас ҫук!
Пĕр ҫăваш та хăй хĕрне

Михетер пек пăхас çук!
Михетере мĕн çитмен?
Мĕнĕм çук-щи суртăмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕртнĕ пир
Сахал-ши мĕн çӳпçемре?
Тырă-пулă туллийех
Ишĕлмест-и кĕлетре?
Çу, сĕт-турăх, сăра-пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?"
Ҫăн сăмахăн суйи çук:
Михетерĕн мĕн çитмест?
Пĕтĕм йалта пĕр пуйан,
Ăна никам çитеймест.
Унăн çурҫĕ хула пек,
Кĕрсен витĕр тухма çук.
Хуралтисен тăррине
Ҫăх-ҫĕп вĕçсе çитес çук.
Карташ тулли йапала
Купаланса выртаççĕ,
Кĕлет тулли тыррисем
Тăкăнас пек тăраççĕ.
Урхамах пек лашисем
Утă-сĕлĕ çийеççĕ:

Унăн выҫăх-ҫĕрлĕхсем
Пиҫĕке пек çӳреççĕ.
Тури-касри çак кил-çурт
Айакранах курăнать—
Пирĕн ватă Михетер
Тивĕçлĕхпе мухтанать.

* * *

Çак ырă çын Михетер
Хăйĕн хĕрне йуратса,
Аслă çăварни хыççăнах
Хуҫĕ ăна сураçса.
Пулас туйа йал-йышсем
Тӳсеймесĕр кĕтеççĕ:
Икĕ пуйан пĕрлешсен,
Шеп те пулĕ туй! теççĕ.
Çинçе хăçан çитĕ-ши?
Йепле вăхăт иртерес?
Çимĕк кунĕ инçе-ши?
Йепле унҫҫенех тӳсес?
Михетерĕн килĕнҫе
Парне ваҫҫи çĕлеççĕ.
Туйăн хăватне сиссе,

Вăйран тухса ĕçлеççĕ.
Анҫах Нарспи сарă хĕр
Туй пуласран хурланаҫ:
Вăрттăн-вăрттăн вăл йĕрет,
Сетнер йатне асăнаҫ.
Йал вĕçĕнҫе тукасра
Пĕҫĕкçеççĕ пӳрт лараҫ.
Амăшĕпе çак пӳртре
Сетнер аҫа пурăнаҫ.
Ҫипер аҫа Сетнерĕн
Урхамах пек лаши пур,
Вагă карҫăк амĕш пур,
Вĕри йунлă ҫĕри пур,
Икĕ вăйлă алли пур.
Тăшман пуçне пĕтерме
Вĕри вут пек çилли пур.
Унтан урăх Сетнерĕн
Нимĕн те çук йапала.
(Анҫах асту: Михетер
Хĕрне памасҫ çукалла).
Пирĕн Нарспи, сарă хĕр,
Çав Сетнере йуратаҫ,
Çавăнпала сарă хĕр
Туй пуласран хурланаҫ.

* * *

Çӳлĕ валак патĕнҫе
Ватă йăмра йешерет.
Куллен ирех çавăнта
Сетнер Нарспийе кĕтет,
Кĕте-кĕтех шăвараҫ
Урхамах пек лашине.
Шыва анаҫ витрепе
Нарспи куллен ирхине.
Нарспи икĕ витрипе
Шăлтăр-шăлтăр килет-çке,
Савăннипе Сетнерĕн
Ҫĕри кăлт-кăлт сикет-çке.
Нарспин çӳхе тутисем
Кулаççĕ-çке таçтанах,
Çӳлĕ валак пуçĕнҫе
Сетнер тăраҫ çутăлсах.
Йăлтăр-йăлтăр куçĕсем
Сарă хĕр çипе пăхаççĕ,
Сар майăхлă тутисем
Ăшă сăмах калаççĕ.

# ÇИМĔК КАÇĔ

Шăнкăртатса шыв йухат
Çӳлĕ валак пуçĕнче;
Кĕмĕл пекех йалтăрат
Шывĕ хĕвел çуттинче.
Кĕмĕл-мерчен тухйапа
Сарă хĕрĕ шыв ăсат,
Сарă каччă калаçса
Хăй лашине шăварат.
Çӳлĕ йăмра ăшĕнче
Кайăк йурлат йуррине.
Лаши ĕçсе тăнăçем
Каччă калат сăмахне:
„Çаплах вара, Нарспиçĕм,
Çук-шим манăн ăраскалăм?
Çаплах сана йут çĕре
Илсе кайĕ-шим усал?
Ах, телейĕм çук тăр çав:
Аçу-аннӳ пит пуйан!
Хăйсен пуйанлăхĕпе
Пăрăнаççĕ çук çынран“.
— „Ан ӳпкелешсем, Сетнер,

Мĕншĕн çывна ӳпкелес?
Ăçта тарса кайас-ха
Пуйан атте-аннерен?
Атте-анне ухмах çав,
Мĕн каласа кăтартас?
Мĕн тăвар-ха, кала-ха,
Мĕнле пирĕн май тупас?
Хĕвел ансан, каç пулсан,
Пайан туйа лартаççĕ,
Хушăлкари пуйанпа
Манăн туйа пуçлаççĕ.
Тăшман ытла хайар тет,
Йепле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта кайса, мĕн тăвас?
Сана тем пек йуратса,
Савса епĕ пурăнтăм,
Анҫах çапах çак куна
Çамрăк пуçăмпа куртăм".
— „Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри йунлă ҫĕрем пур,
Вата карҫăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур,

Вĕсенҫен те хаклăрах,
Ҫунăм савни, есĕ пур.
Анҫах сана та пайан
Туртса илен тăшман пур.
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анҫах ăна пĕтерсен
Унтан усал тĕнҫе пур.
Хăвăн кăмăлу пулсан
Лашам ҫине лартăттăм,
Айаккалах ку йалтан
Вĕҫĕттĕм те кайăттăм".
— „Сетнер, таврăн, хăвăртрах:
Шыва анаӳ пĕр арăм...
Ҫун савнипе калаҫса
Уйрăлассăн туймарăм".
— „Сывă пул еппин, Нарспи,
Ан ман еппин мĕскĕне!"
Лаши сикрĕ, ыткăнҫĕ,
Вĕҫсе кайрĕ килнелле.
Нарспи ăна хурланса
Пăхса йулҫĕ хыҫĕнҫен.
Хускалмарĕ вырăнтан



Сетнер, таврӑн хӑвӑртрах:
Шыва анаӳ пӗр арӑм...

Савни кусран кайиҫҫен:
„Сывă пулах, сывă пул!
Йепле сана манăп-ши,
Санпа пĕрле пулмасан
Йепле йутра пулăп-ши?“
— Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăратăн?
Каҫҫу ытла ватă-им?
Парнӳ ытла сахал-им?
Терĕ арăм ҫитрĕ те.
Нарспи шывне ăсрĕ те,
Килне утрĕ хуйхăрса.
Килне ҫитрĕ, йĕрсе йаҫĕ
Сĕтнерĕшĕн хурланса.
Пӳртре ватă карҫăкĕ
Вăрҫса ҫӳрет ахалех,
Сиплет тулта Михетер
Туй кӳмине пĕҫҫенех
Ĕҫлет ватă пуҫĕпе,
Пуртипеле каскалаҫ.
Савнă хĕрщĕн тăрăшса
Пиҫĕ тăрăх тар йухаҫ:
— „Мĕн кĕҫĕнрен ӳстертĕм
Ҫак тарана ҫитерме,

Ĕнтĕ пайан йулашки
Ĕçĕм пултăр хĕрĕме.
Ӳссе çитрĕ, пулђĕ хĕр—
Пуйан упăшка кирлĕ,
Упăшкине тупрăмăр—
Кӳми лайăхрах кирлĕ.
Çитрĕ ĕнтĕ çимĕк те,
Хĕрĕн туйне тумалла,
Тантăшăмсем пухăнсан,
Кĕçĕр туйне лартмалла“.

* * *

Михетерĕн килĕнђе
Сăра пиђĕки кусаť,
Йалти тантăш-тăвансен
Пырĕ тĕпĕ йарăнаť.
Икĕ пысăк кăмака—
Тĕрлĕ апат пăсланаť,
Йалти тантăш-тăвансен
Тута-çăвар çуланаť.
Хура пӳртре шăпăрçă
Лараť шăпăр тӳрлетсе,
Йалти çамрăк кађђăсен

Ури кайаҫ ҫёкленсе.
Туйӑн хӑватне кётсе
Пурте вёҫсе ҫӳреҫҫё,
Килти пёр ҫун хуйхине
Пёртте вёсем сисмеҫҫё.
Нарспи лараҫ лаҫҫинҫе
Икерҫёсем ҫуласа,
Ҫураҫнине асӑнса
Лараҫ мёскён хуйхӑрса:
— Ҫиҫё йутран килҫё йут
Атте килне хӑтана,
Сарӑ хёре ҫураҫаҫ
Ҫиҫё йутри пуйана.
Атте-анне анваскӑр,
Тата пёр ҫул тӑрӑр-ха,
Пёртен пёрех хёрёре
Тата пёр ҫул усрӑр-ха.
Атте-анне ӳсёрпе
Хёрне итлес темерё,
Каҫҫи пуйан тенипе,
Хёрён ҫунне пёлмерё,—
Ватӑ ҫун та, хытӑ ҫун,
Хытса кайнӑ кёҫҫе ҫав.



Çураçнине асăнса
ларат̀ мĕскĕн хуйхăрса...

Çамрăк ţун та, пĕţĕк ţун,
Ţунĕ ытла çемçе çав.
Кайăк ţунĕ пулсассăн,
Йĕрĕţţĕ те кулĕţţĕ;
Çунаţĕсем пулсассăн,
Вĕçĕţţĕ те кайĕţţĕ.

* *
*

Хĕвел анţĕ хĕрелсе
Хура вăрман хыçнелле.
Кĕтӳ анţĕ кĕрлесе
Аслă Силпи йалнелле.
Ав унта хитре хĕрсем
Ĕни хыççăн ţупаççĕ,
Ţейе маттур каţţисем
Вĕсен хыççăн йулмаççĕ.
Акă пĕр етем ţупаť,
Ула ĕни мĕкĕрет.
Сĕмсĕр сысни çухăраť,
Пĕтĕм йала çĕмĕрет.
Кĕтӳ хыççăн урампа
Хӳра тусан хăпараť.
Акă тусан ăшĕнţе
Карţăк аран çеç утаť.

Хӑй вӑл хӑрах аллипе
Йӑтнӑ сӑра ҫӗресси:
Ай-ай хӗн пек ҫӗклесси,
Ай-хай ҫӑмӑл ӗҫесси!
Пирӗн ватӑ Михетер
Тантӑшсене йыхӑрать;
Унӑн ватӑ карҫӑкки
Сӑра йӑтнӑ, уттарать.
Тантӑш патне кӗрет те,
Уҫать сӑра ҫӗресне,
Туйа пыма йыхӑрса,
Ӗҫтерет туй сӑрине:
„Ырӑ тантӑш-тӑвансем,
Пире хисеп тумӑр-ши?
Хӗре каҫҫа паратпӑр,
Тури касса утмӑр-ши“.
— „Пырӑпӑрах, пырӑпӑр,
Пымасӑрах йулмӑпӑр!
Турӑ пӱрсен, сывӑ пулсан,
Кӑмӑлӑра татмӑпӑр!“
Карҫӑк йала ӗретлет,
Тӗттӗм те пулса ҫитет;
Карҫӑк ҫӱрет килӗнҫе,
Ҫӑкӑр-тӑвар хатӗрлет.

* * *

Ырă тантăш-тăвансем,
Тури-касса уттарар!
Перекетлĕ сăрана
Ĕçе-ĕçе туй лартар!
Пирĕн тăван хĕр парать,
Пире унта йыхăрать.
Хăйĕн савнă хĕрĕшĕн
Урăм-сурăм туй пуçлать.
Туйпе-пуçне пуçличчен,
Авал чăваш йăлипе
Ваттисене асăнса
Тăкар çăкăр-тăварне:
Ват аттесем, аннесем,
Ырă курăр çăтмахра,
Пирĕн çăкăр-тăварсем
Пулччăр сирĕн умăрта.
Пирĕн савнă Нарспие
Парăр ырă пурăнăç,
Парăр унăн телейне,
Ырăлăхпа савăнăç!—
Ваттисене асăнчĕç
Авалхисен йĕркипе.

Унтан туйа пуҫлама
Кӗђӗҫ щурӑ кӗлете.
Курка тулли сӑрипе
Ашшӗ-амӗш пахиллет;
Ашшӗ-амӗш умӗнђе
Хӗрӗ хурланса йӗрет.
— Нарспи хӗрӗм, пил сана!
Упӑшкуна ан пӑрах,
Аван пурӑн унпала,
Тату пулӑр йаланах,
Итле ӑна, йӑваш пул,
Усал ҫынпа ан ҫыхлан;
Ӗҫне ӗҫле, ӗҫђен пул,
Кирлӗ марпа ан хӑтлан!
Атте-анне ўкӗтлет,
Хӗр куҫҫўлне йухтарса.
Шӑпӑр сасси ђӑйлатаТ̆,
Туйа йађӗҫ пуҫласа.

* *
*

Силпи йалӗ харлатса
Вилнӗ ҫын пек ҫывӑраТ̆.
Тӗнђе лӑпкине курса,



„Нарспи хӗрӗм, пил сана!“

Çӳлте уйăх саванаҫ.
Кĕрсе пĕтнĕ вăййăран
Сарă хĕрсем, каҫҫăсем,
Туй халăхĕ çывăраҫ,
Çывăраççĕ хуçисем.
Ăшă сывлăш сивĕнет,
Сасă-ҫĕвĕ илтĕнмест;
Пĕр йытă çеç вĕркелет,
Çăвар карма ӳркенмест,
Автан çурçĕр авăтаҫ,
Ларнă çĕрте çывăраҫ,
Хуллен-хуллен уйăх та
Вăрман хыçне пытанаҫ.
Ырă тутлă ăйăхпа
Ҫăваш çынни çывăраҫ,
Пĕр ҫунăн çеç хуйхăпа
Çав каç ҫĕри çурăлаҫ.

## Т У Й

Хĕвел тухнă тухманах
Тĕтĕм кайрĕ йал çинҫе.
Куçне уçнă уçманах,
Ҫăваш лараҫ мунҫинҫе.

Çимĕк кунĕ йалĕпе
Çынсем мунџа кĕреççĕ,
Çимĕк куракĕпеле
Çан-çурăмне хĕртеççĕ
(Ват аттесем, аннесем
Çапла хушса хăварнă);
Çапла пайан џăвашсем
Мунџа кĕрсе тасалнă.
Çĕнĕ кĕпе-йĕмпеле
Тухрĕç вĕсем урама,
Тухрĕç вĕсем йеррипе,
Утрĕç ирех туй курма.
— Акă туй та, акă туй,
Пирĕн туйсем çаплалла.
Тури-касри туй сасси
Йанăратаҫ çур йала.

* * *

Михетерĕн кил-çурџĕ
Айакранах курăнаҫ.
Урам йенџен хапхаран
Çын кĕрет те, çын тухаҫ.
Пÿрт умĕнџе çын нумай,

Килнĕ вĕсем туй курма.
Ваттисем те сахал мар,
Килнĕ вĕсем сăра ĕçме.
Йарăнтарса йавăнса
Шăпăр кĕвви ташлатаҫ.
Ырă хуçа хушнипе
Туй халăхĕ туй тăваҫ.
Туй халăхĕ туй туса
Ывăнаҫ те савăнаҫ.
Шăпăр сасси ҫарăнсан.
Туй йурриĕ пуçланаҫ:
Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларатăр?
Шăппăн-шăппăн лармашкăн
Шăпҫăк ҫĕппи мар епир.—
Анҫах шăпăр хăлăхсăр:
Татах ташлама ҫĕнет.
Кĕрĕс-кĕрĕс ташласа
Пӳрт урайĕ силленет.
Ырă хăнасем тĕпелте
Ĕçсе-çисе савăнаççĕ,
Хĕрĕпеле каҫҫине
Ырă кунсем сунаççĕ:



Кӗрӗс-кӗрӗс ташалса пӳрт урайӗ силленет.

Сывӑ пулт̧т̧ӑр, пур пулт̧т̧ӑр
Ат̧а-пӑт̧аллӑ пулт̧т̧ӑр;
Ырӑ-тату пурӑнт̧т̧ӗр,
Усал сӑмах ан илт̧ӗр.
Ӗҫӗр-ҫийӗр, тӑвансем,
Ӗмӗр пӗрле пурӑнар!
Хӗрпе кат̧т̧а йуратса,
Ат̆ӑр шепрех туй тӑвар!
Акӑ ӗнтӗ, пӑх ӗнтӗ,
Йепле ташлат̆ ват хуҫа!
Хӗрин туйин савӑнӑҫӗ
Ҫӗклет иккен ват пуҫа!
Маттур пуса-кат̧т̧исем
Вӑйран тухса сикеҫҫӗ.
Вӗсен хыҫҫӑн хӗрӗсем
Такмакӗпе сӗтеҫҫӗ...
Пурҫӑн ҫӳҫелӗ т̧аршав
Мат̧т̧аранах сулланат̆.
Хӗрлӗ т̧аршав хыҫӗнт̧е
Пӗркент̧ӗклӗ хӗр ларат̆.
Хӗр ларат̆ те, хӗр йӗрет,
Пӗркент̧ӗкне ҫӗклемест,
Хӗр-ҫуммисем йурласа

Унăн сасси илтĕнмест.
Хĕр-çуммисем йурринҫе
Асăнаççĕ Нарспийе,
Михетерĕн Нарспине —
Тăваççĕ мĕн уп туйне.
Шурă сухал Тăхтаман
Упăшкийĕ пулмалла.
Хăйĕн ҫунĕ савнинҫен
Каймаллипех каймалла.
Есĕ йута кайсассăн
Мĕн тăвĕ-ши Сетнерӳ?
Ырă Нарспи, аппаçăм,
Ăçта сапăн телейӳ?

* *
*

Туй тăваççĕ çĕмрĕлсе,
Унăн вĕçĕ-хĕрри çук:
Çӳлĕ сăран кӳмийĕ
Тантăш патне çӳретет.
Хĕр-çуммисен йуррийĕ
Таçта çитех илтĕнет.
Кунĕн-çĕрĕн выҫама
Шăпăрĕ те ҫарăнмасĭ,
Кунĕн-çĕрĕн ташлама

Пуса-каҫҫи ывӑнмасӑ.
Пётём йалти аҫа-пӑҫа
Туйӗ хыҫҫӑн хӑвалаӑ
Вилес пекех ватӑ сын
Пўрт хыҫӗнҫе ҫывӑраӑ.
Туй тӑвар та шеп тӑвар,
Ватӑ ҫынӑн халӗ ҫук,
Выртнӑ ҫӗрте сиккелет,
Анҫах тӑма вӑйӗ ҫук.

## ЙУМӐҪ ПАТӖНҪЕ

Пӗҫӗкҫеҫҫӗ хура пўрт,
Шурӑ старик сак ҫинҫе,
Ҫутӑ кўртмест нимӗн те
Тӗнӗ пек сеҫ ҫўреҫе.
Уҫса хунӑ алӑк ҫеҫ
Пўртӗн ӑшне ҫутатаӑ,
Хӗвел ҫутти пайӑрки
Урай тӑрӑх ав шӑваӑ.
Лараӑ старик тӗпелте
Ҫӑпатине сапласа,
Ват ал-ура йӗркипе
Мӗшӗл-мӗшӗл маташса.
Акӑ хӗвел ҫуттийӗ

Шуса-шуса пыҫҫӗ те,
Сиксе ларҫҫӗ старикӗн
Кӑвак ҫӳҫлӗ пуҫ ҫине.
Ҫимӗк ҫуйӗ урамран
Ҫӗклентерет ҫҫӗрине,
Хӗвелӗ те выҫҫаса
Сутатать ҫӳҫ пӗрҫҫине.

* * *

Мӑкӑртатса, мӑшлатса
Ҫӑпатине сапласа
Ларнӑ ҫӗрте сисмен те,
Ҫын килнине пӗлмен те:
Уҫӑ алӑк умӗнҫе
Карҫӑк тӑра парать мӗн,
Кӑвак ҫӳҫлӗ старике
Ӑшӑ сӑмах калать мӗн.
Ӑшӑ самах калакан
Сетнер амӗш пулнӑ мӗн.
Ун ывӑлне, Сетнерне
Усал-тӗсел йернӗ мӗн.
Ҫавӑнпала амӑшӗ
Йумӑҫ патне уттарҫӗ,

Ах-ахлатса хуйхӑрса,
Хӑй хуйхине каларӗ.
Нумай вӗсем старикпе
Ларҫӗҫ сӑмах калаҫса,
Калаҫнӑ ҫух хушӑран
Ӗлӗкхине асӑнса.
Йулашкинҫен тин вара
Килӗшрӗ леш старикки—
Мӑшӑр ҫӑлха, пӗр кӗпе
Пама пулҫӗ карҫӑкки.
Вара старик тӑҫӗ те,
Хӑйӗн ӗҫне пӑрахса,
Хупса хуҫӗ алӑкне
Турҫӑкипе ҫаклатса;
Ҫине кӗрӗк тӑхӑнса,
Ҫӗлӗк тытрӗ хул айне
Ури айне шӑрт хурса,
Укҫа хуҫӗ хӑй умне;
Кӑвак ҫӳҫне йакатса,
Укҫа ҫине, суккӑрскер,
Пӑхрӗ куҫне ҫакӑртса.

* * *

Пăхса тăҫĕ-тăҫĕ те,
Шур сухалне йакатса,
Каларĕ вăл йеррипе
Карҫăк йенне ҫаврăнса:
„Ҫамки шăтăк—хупăнмĕ,
Ҫĕри татăк—сыпăнмĕ.
Пӳлĕх турă пӳрнинҫен
Нимĕнпе те иртеймĕ.
Панă ăна пӳлĕхҫĕ
Вĕри йунпа ҫемҫе ҫун.
Пӳрнĕ ăла пӳлĕхҫĕ
Кĕске ĕмĕр, йăвăр кун.
Сивĕ кунсем килĕҫ те,
Шăнса кайĕ вĕри йун.
Хытă кунсем килĕҫ те,
Хытса кайĕ ҫемҫе ҫун.
Вĕри кунсем килĕҫ те,
Вĕрилевĕ шăннă йун,
Хытнă ҫĕртен, ирĕлсе
Ҫунса кайĕ ҫемҫе ҫун“.
Унтан старик ҫаранса
Шухăшласа тăҫĕ те,



Ҫамки шӑтак—хупӑнмӗ,
Ҫӗри татӑк—сыпӑнмӗ.

Кĕрĕкĕпе ҫĕлĕкне
Сакки ҫине хуђĕ те,
Ҫапла татах каларĕ
Карђăк йенне ҫаврăнса
(Ларай карђăк сак ҫинђе
Урлă-пирлĕ тайăлса):
„Тĕрлĕ усал-тĕсел мар,
Киреметри хывни мар,
Ђир-ђĕр йертен йĕрĕх мар,
Ҫын тухатса хуни мар,
Ҫук, кин, санăн ывăлна
Турă ҫырнă ҫаплалла.
Ан йĕр, кинĕм, пӳлĕхҫе
Йепле хирĕҫ пымалла?“
Старик ҫапла каларĕ,
Нимĕн тума пĕлмерĕ,
Хăйĕн ĕҫне тытрĕ те,
Пĕр сăмах та ђĕнмерĕ.
Пуҫне усса, хурланса
Тухса кайрĕ карђăкĕ.
Ҫăпатине сапласа
Ларса йулђĕ старикĕ.
Мăкăртатса, мăшлатса,

Антăраса ларат̆ вăл!
„Мĕнле вара ку пайан?“
Хăй ăшĕнҫе ыйтат̆ вăл:
„Халиҫҫенех ҫынсене
Йумăҫ пăхса параттăм,
Суйа сăмах суйайса
Улталаса йараттăм—
Мĕнле вара ку пайан?
Ҫĕре ҫăнах пĕлҫĕ-шим?
Суйса парас тенĕҫҫĕ—
Ак тамаша, тĕрĕс-шим?“

## ТАРНИ

Хĕвел анса пытанат̆,
Силпи йалĕ лăпланат̆.
Тĕттĕм пулса ҫитеспе
Пирĕн туй та саланат̆.
Йалти хĕрсем, каҫҫăсем
Вăййа тухнă выљама,
Тухнă пирĕн Нарспи те
Хĕр ĕмĕрне ăсатма:
Йулашки каç выљаса
Йулас арăм пулиҫҫен,

Йулашки каç Сетнере
Курас йута кайиҫҫен.
Сетнер тăраҫ çавăнтах
Пуçне усса хуйхăрса.
Сарă хĕрĕн куçĕнҫен
Анаҫ куççулĕ йухса.
Вăйă çынни салансан
Пайтах вĕсем калаçрĕç.
Ыталаса пĕр-пĕрне
Тĕттĕм çĕрте çухалҫĕç.

* * *

Вĕт çăлтăрсем тахçанах
Пĕлĕт айне хупланҫĕç.
Вăрман тĕлне хуп-хурах
Сĕм пĕлĕтсем капланҫĕç.
Çумăр çăваҫ, шыв йухаҫ,
Хура вăрман кĕр кĕрлет.
Çил тухаҫ те çил кайаҫ,
Выçă кашкăр пек улаҫ.
Çиçĕм пĕрмай çуттипе
Вăрман ăшне çутатаҫ.
Тĕттĕм вăрман ăпĕпе

Пĕр йуланут кустарай̆.
Лаша пырай̆ тăлхăрса
Вăрман ăшне йанратса;
Иккĕн ларнă утланса,
Лаша ҫитет ывăнса.
Йывăҫ ларай̆ улăп пек
Тĕттĕм ҫĕрте кашласа,
Ђипер кайăр! тийет те,
Пуҫне тайай̆ ҫул пăрса.

***

Ҫурăм пуҫĕ ҫап-ҫутах,
Хĕвел тухас пек тăрай̆.
Ҫурăм пуҫĕ шурсанах,
Туй халăхĕ пухăнай̆.
Хăй йĕркипе ташлама
Вăхăт пуса-кађђисен.
Хăй йĕркипе йурлама
Вăхăт ҫитнĕ хĕр-ҫумсен.
Шăпăр сасси илтĕнмест,
Шăпăрҫи те курăнмасй̆.
Ырă хăна хушшинђе
Ерех-сăра тăкăнмасй̆.



Пĕр йуланут кустарат̆...
...Иккĕн ларнă утланса...

Стариккипе карҫӑкки
Хура пӳртре вӑрҫаҫҫӗ.
Мӗн пулнӑ-ши ҫав тӗрлех—
Пурте шӑппӑн лараҫҫӗ?
Шӑппӑн-шӑппӑн лармасӑр:
Вӗсен хӗрӗ ҫук пайан,
Нарспи усал Сетнерпе
Тарса кайнӑ вӑйӑран.

*
* *

Виҫ йуланут вӑрманта
Йӗр йӗрлесе ҫӳреҫҫӗ.
Пӗри кунта, леш унта,
Темӗнле йӗр йӗрлеҫҫӗ.
Йӗр йӗрлеҫҫӗ, итлеҫҫӗ:
Пӗрер сасӑ пулмӗ-ши,
Хӗвел тухаӳ ҫутатса—
Кирлӗ ҫула уҫмӗ-ши?
Анҫах нимӗн паллӑ мар,
Кӗрес тата шаларах.
Вӑрҫас килет ҫиллипе:
Тупасҫӗ-ҫке хӑвӑртрах!
Вӑрман ҫӑра, пит тискер,

Унӑн ӑшӗ ҫӑв та ҫав!
Йӗр ниҫта та паллӑ мар,
Ниҫта кайма аптӑрав!
Виҫ йуланут вӑрманта
Йӗр йӗрлесе ҫӳреҫҫӗ.
Пӗри кунта, леш унта,
Темӗнле йӗр йӗрлеҫҫӗ.

* *
*

Сетнер туглӑ ҫывӑрать
Ҫӳлӗ йуман кутӗнҫе,
Нарспи ларать тӗлӗрсе
Сетнер пуҫӗ вӗҫӗнҫе.
Нарспи тӗлӗк тӗлленет:
Ашшӗ йытӑ пулнӑ та,
Шӑлӗсемпе шаккаса
Сиксе ҫӳрет вӑрманта:
Ӑҫта тартӑн, усал хӗр?
Пуҫна ҫийӗп тупӑнсан!
Йытӑ ури айӗнҫе
Шатӑртарать сӗм вӑрман.
Ҫывӑх, ҫывӑх, ак ҫитет!
Нарспи йалтах вӑранать.



— Сетнер, Сетнер! тытрĕç-çке,
Тăр, тăр! тарса хăтăлар!

Пăхаҫ: хăйĕн патнелле
Виҫ йуланут кустараҫ:
— Сетнер, Сетнер! Тытрĕҫ-ҫке
Тăр, тăр! тарса хăтăлар!
Ай, пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр,
Ăҫта тарса пытанар!

* *
*

Маттур шăпăрҫă пайан
Икĕ пуса-каҫҫипе
Тытса килҫĕ вăрмантан
Сетнерпеле Нарспийе.
Карҫăк вĕҫсе тухрĕ те,
Ҫӳҫрен йаврĕ Нарспине.
Старик ҫупса тухрĕ те,
Ҫышкă паҫĕ Сетнерне.
— Ей аннеҫĕм, аннеҫĕм,
Мана ҫӳҫрен ан сĕтĕр,
Мана апла вĕрентсе,
Манран ырă ан кĕтĕр.
— Ей, Мхетер асатте,
Хĕнениле усси ҫук.
Есĕ мана хĕнесе



Мана ҫӳҫрен ан сӗтӗр...
...Манран ырӑ ан кӗтӗр.

Кĕлрен вутă тăвас çук!
Урнă йытă Михетер
Хăй саламат йăтрĕ те
Тытăнҫĕ-çке тулама
Çыхса хунă Сетнере.
Карташĕнҫе çын нумай—
Туйне курма килнĕ пек.
Хура тăпра çийĕнҫе
Выртаť Сетнер вилнĕ пек.
Амăшĕ те çавăнтах
Тăраť йĕрсе, ылханса,
Йараť ăнсăр ывăлне
Икĕ çынна йăттарса.
Хура пўртре Нарспине
Питне-куçне çăваççĕ,
Татах пĕркенҫĕк айне
Ҫаршав хыçне лартаççĕ.
Тăпăр-тăпăр-тăпăрҫăк,
Аťăр шепрех туй тăвар!
Анҫах хаҙхи ĕç çинҫен
Çĕн кĕрĕве калас мар!
Акă туй та, çакă туй,
Пысăк туй та, пăсăк туй!

# ИКĔ ТУЙ

Çуркуннехи вут хĕвел
Каç йеннелле сулăнать.
Йал вĕçĕнҫи сĕм вăрман
Темĕншĕн пит йанăрать.
Халăх кĕтет тахçанах
Анат хапха патĕнҫе.
Туй килнине çавăнтах
Систерҫĕçĕ йевĕҫе.
Кĕпĕр-кĕпĕр сиктерсе
Килсе тухрĕ вăрмантан
Ыттисенҫен маларах
Çĕнĕ кĕрӳ Тăхтаман.
Лаптăк сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал.
Лаши вĕççе пырупа
Пиҫĕ-куçĕ пит усал.
Хура сăкман, сарă çĕлĕк
Çамки çинҫе тенкĕпе.
Шурă ҫăлха-çăпата
Пит килĕшет кĕрĕве.

* *
*

Арҫын туйӗ йурласа
Урам тӑрӑх уттарать.
Ырӑ йевҫӗн хапхисем
Уҫӑлать те хупӑнать.
Хӗр туйӗ те Ту-касран
Хирӗҫ анать ҫӗмӗрсе.
Нарспи тутӑр айӗнҫе
Тӑрса пырать хӗр йӗрсе.
Сарӑ хӗрӗн ҫӗринҫе
Вутра ҫуннӑ пек ҫунать.
Ватӑ каҫҫине курса,
Нарспи хытӑ хурланать:
„Ей аттеҫӗм, аннеҫӗм,
Мӗншӗн ҫирӗр хӗр пуҫне,
Мӗншӗн патӑр хӗрӗре
Ҫиҫӗ йутӑн аллине.
Ей каҫҫӑҫӑм, Тӑхтаман,
Манпа ырӑ курас ҫук.
Епӗ ҫунӑм пӗтсен те,
Санпа пӗрле пулас ҫук“!
Ырӑ йевӗҫӗ сӑрапа
Туйа хирӗҫ вӑл тухать.

Хушăлкасен мăн кĕрӳ,
Хăй такмакне вăл калаҫ,
Хăй аллинчи сăрана
Тăка-тăка ҫаптараҫ.
Хура лаша тĕк тăмасҫ—
Ҫĕнĕ кĕрӳ ҫунтараҫ.
Ҫĕнĕ кĕрӳ ҫумĕнче
Ҫичĕ йулапут ташлаҫ,
Пĕтĕм йала ҫĕмĕрсе
Ҫăвар карса антăхаҫ.
Ҫĕнĕ хапха айĕнчен,
Кĕрсе пĕтмест урапа,
Хапха тăрри шатлатаҫ
Саламатпа ҫапупа...
Ырă йевчĕ килĕнче
Туйне турĕҫ ытлашши.
Тепĕр кунне урамра
Турĕҫ йалта вăй-килли.

* *
*

Турĕҫ туйа виҫĕ кун
Хушăлкари хăтасем,
Анчах кайма тепĕр кун

Вӑхӑт теҫҫӗ хӑнасем.
Арҫын туйӗ пухӑнаҫ,
Хушӑлкана кайас тет:
„Кувта туйа турӑмӑр,
Ёнтӗ киле тарас“, тет.
— Анваскӑр-ха, хӑтасем,
Тепӗр киле кайар-ха,
Халех киле кайиҫҫен,
Туйа шепрех тӑвар-ха!
Татах тепӗр тапхӑрне
Туйне турӗҫ ҫунтарса.
Йулашкинҫен хӑтасен
Халӗ пӗтрӗ туй туса.
Арҫын туйӗ пухӑнса
Килне кайма хускалҫӗ.
Кайан туйа ӑсатма
Пӗтӗм Силпи пухӑнҫӗ.

* *
*

Аслӑ масар тӗлӗнҫе
Туй лашисем тӑраҫҫӗ.
Хӗрӗн туйне ӑсатма
Ашшӗ-амӗш пыраҫҫӗ.

Туйĕ тавра йал-йышсем
Кĕпĕртетсе тăраççĕ.
Ваттисене асăнсан,
Хĕр кайвине сăнаççĕ.
Ђирлĕ Сетнер çавăнтах
Тăрать хăйĕн амăшпе.
Ђун савнине, Нарспине
Шырать ђирлĕ куçĕпе.
Михетерпе карђăкки
Пахиллерĕç хăй хĕрне,
Мĕн пур тантăша йĕртсе
Тăкрĕç ăшă куççульне.
Савнă хĕрне сăмах та
Каламарĕç намăсшăн:
Сетнерпеле вăрмана
Намăс туса тарнăшăн.
Пахиллесен, мĕн тусан,
Кайрĕ туйĕ хускалса.
Сетнер çине пăхрĕ те,
Нарспи кайрĕ макăрса.
Туй кайсассăн тахçанђђен
Йантăрарĕ сĕм вăрман.
Йал-йыш утрĕ килнелле
Туйĕ куçран çухалсан.

Амăшĕпе Сетнер те
Килне утрĕç хуйхăрса,
Ҫун савнинҫен ĕмĕрех
Йаҫĕç ăна уйăрса:
„Ех, пурăнăç, пурăнăç!
Вилме анҫах йулҫĕ çав.
Ех, пурăнăç, Нарспи те
Ҫиҫĕ йута кайрĕ çав,
Унсăр пуçне мĕн тăвас
Ăрăскалсăр пуçăмпа?
Ăçта кайса кĕрес-ха
Хамăн усал хуйхăмпа?“
Нарспи кайрĕ йут йала,
Сетнер утрĕ хăй килне.
Икĕ ҫун та, савнă ҫун
Ҫĕнеймерĕç тăшманне.
Икĕ савни тарнине
Хуплаймарĕ сĕм вăрман.
Сарă хĕре Нарспийе
Илҫĕ-илҫех Тăхтаман.
Тăрса йулҫĕ тăлăхах
Сетнер çав-тĕр ҫун савни.
Турă çырни ахăрах,
Ҫапла-тăр çав самани.

Йалта нумай ун çинҫен
Урлă-пирлĕ калаçрĕç,
Тем-тĕр ăслă çынсем те
Кутне-пуçне тупмарĕç.
Нарспи карĕ йут çĕре,
Сетнер йулҫĕ тăлăхах
Ашшĕ çирĕ хăй хĕрнех,
Тăван çирĕ тăванах.

## ХУШĂЛКАРА

Хушăлкара туй иккен,
Туйĕ ытла шеп иккен,
Шур сухаллă Тăхтаман
Туйне тăваĭ тет иккен.
Ҫипер каҫҫă Тăхтаман
Силпи хĕрне çаклатнă,
Çав-тĕр аван мăшăра
Урăм-сурăм туй лартнă.
Туй тăваççĕ ташласа
Çамрăк пуса-каҫҫисем.
Туй йуррисем йурласа
Ывăнаççĕ çăварсем.
Ĕнер Силпи йалĕнҫен

Туйĕ килҫĕ таврăнса,
Пайан кĕрӳ хĕр туйне
Кĕтет хĕрӳ туй туса.
Пайан хĕр туйĕ килсен,
Каçпа хĕве хупмалла.
Ыран ирех тăмалла,
Хĕртен арăм тумалла.

* *
*

Аслă йал та Хушăлка
Икĕ тăван хушшинҫе;
Туйне туса Тăхтаман
Ларать сĕтел хушшинҫе.
Тĕрлĕ апат айĕнҫе
Çăка сĕтел авăнать.
Ӳсĕр кĕрӳ пуçĕнҫе
Тĕнҫе вăр-вăр çаврăнать.
Тулта хĕвел çутатать,
Кăнтăрлана сулăнать;
Кĕрӳ пӳçĕ ӳсĕрпе
Айалалла усăнать.
Çеçен хирте путене
Вăхăт-вăхăт вăл йурлать;

Туй килмест-и-ха тесе,
Текех кĕрӳ йĕтетет.
Кĕрӳ çинђи шурă кĕпен
Арки вăр-вăр тăвать-çке —
Туйа кĕтсе вată пуçăн
Ђунĕ вăр-вăр тăвать-çке.

* *
*

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав
Шăнкăртатать çулпала:
Хĕр-туй килет çĕмĕрсе
Урам тăрăх йалпала.
Вунă арăм хушпупа
Сăран кӳме çийĕнђе,
Хĕрĕх виçĕ урапа
Сăран кӳме хыçĕнђе.
Çиђĕ çĕрте урамра
Ђарăнђĕç туй çыннисем:
Хирĕç тухрĕç сăрапа
Хушăлкари тантăшсем.
Йурлаççĕ те кĕреççĕ
Ырă кĕрӳ хапхинђен,
Ĕçеççĕ те çийеççĕ

Инçе çулсем хыçёнҫен.
Кăнтăрла та çитмен-ха,
Каçҫен вăхăт нумай-ха,
Каç пулиҫҫен туй тума
Пире вăхăт нумай-ха.

* * *

Шыв-шур пуçё пуçласан,
Тёттёмҫенех сикрёç те,
Тăхтаманпа Нарспийе
Хёве хупрёç кёлете.
Ăслă çынсем уçăпах
Питёрҫёç туй кёлетне.
Йăл-йăл кула-кула çеç
Кёрсе кайрёç пўртнелле.
Акă каҫҫă пёр каҫҫă
Кёлет тавра йавăнаҭ.
Те итлеме, те пăхма
Пушă вырăн вăл шыраҭ.
Тăват-пилёк аҫа-пăҫа
Йавăнаççё çавăнтах:
Ай намăссăр аҫа-пăҫа!
Мён кирлийех пур унта!?

Анҫах акӑ итлеҫҫӗ.
Илтӗнет те пулмалла:
Ав усалсем лӑплан҃ӗҫ.
„Хӗр калаҫать, ан шавла!“
Шалта Нарспи темӗскер
Тӑхтамана каларӗ,
Анҫах хуллен сӑмахне
Пӗртте илтсе пулмарӗ.
— „Асту, Нарспи, йӗвенӳ
Ман алӑра малашне“—
Терӗ хытах Тӑхтаман,
Ҫараймасӑр ҫиллине—
„Туйна анҫах ӑсатам,
Унта мана пӗлӗн-ҫке;
Мӗн пуласне пӗлме ҫук—
Ху курасне курӑн-ҫке“.
Урӑх нимӗн илтӗнмест,
Пӗр сӑмах та ҫӗнмерӗҫ.
Илтекенсем кӗтсен те,
Пӗр сӑмах та илтмерӗҫ.
Аҫи-пӑҫи ҫавӑнтах
Апшӗ килне ҫупаҫҫӗ.
Илтни ҫинҫен ҫав хутрах
Йалта сӑмах сараҫҫӗ.

Илтен-тăран сар каҫҫă
Вăрманалла уттарҫĕ,
Хăлха ꙑлтнĕ сăмаха
Хăй ашĕнҫе пытарҫĕ.
Ун ҫилĕлĕ кусĕнҫен
Йăлтăр-йăлтăр вут кайрĕ.
Кĕрен-тухан йалти ҫын
Каҫҫă ҫине пăхмарĕ.
Йуман анҫах вăрманта
Хăй кўрĕшне систерҫĕ.
Ҫав вăрмана кĕнĕ ҫын
Пирĕн тăван Сетнерҫҫĕ.

* * *

Пўртре сĕтел ҫийĕнҫе
Пăтă пăсне кăларат:
Ҫĕпĕ кĕрў Тăхтаман
Хăнасене ăсатат.
Ырă кĕрў Тăхтаман
Туй пăттине сăйласа,
Туй халăхне пуҫ тайат
Ҫапла сăмах каласа:
„Ан ўпкелĕр, хăтасем,

Сăйăм питех нумай мар.
Ĕçĕр-çийĕр, тăвансем,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар".
Вилĕ-ӳсĕр хăтасем
Урăм-сурăм кĕрлеççĕ.
Вилĕ-ӳсĕр пулсан та,
Мĕн каласне пĕлеççĕ:
„Ей, кĕрӳçĕм Тăхтаман,
Çана ӳпкев çук пиртен.
Пирĕн хĕре хытă пăх,
Тату пулăр вилиҫҫен".
Карташĕнҫе лашасем
Тăраççĕ-çке ташласа.
Тухса кайрĕç хăтасем
Ырă йурă йурласа:
„Айăр кайар çулпала
Курка тулли пылпала..."
Ураписен хыçĕнҫен
Тусан кайрĕ çулпала.
Ав шăнкăрав йанăрайӗ,
Силпийеле ҫуптарайӗ.
Лаша ҫупайӗ пуç ухса,
Ӳсĕр хуçи хăвалайӗ.
Туй пĕтрĕ те, туй кайайӗ,

Такăр çулпа ţуптарай,
Пĕрер ватти, тĕл пулсан,
„Тавси, тавси!"—кăшкăрай.
Кайан туйăн сассине
Нарспи йулţĕ итлесе.
Таçта-таçта инçетре
Тусан кайрĕ çĕкленсе.

## ÇИМĔК ИРТСЕН

Иртрĕ çимĕк, иртрĕ туй,
Иртрĕ туйри савăнăç.
Кайрĕ пĕр пек тăсăлса
Кунран кунах пурăнăç.
Хирте ака айĕнţе
Çерем лап-лап касăлай.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи ţунĕ касăлай.
Хирте çава айĕнţе
Курăк вăш-вăш йăванай.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи пуçĕ усăнай.
Куллен кунах тĕнţене
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет;

Хуйхă-суйхă кунран кун
Нарспи ҫĕрине ҫийет.
Куллен кунах саламат
Анаҫ-ҫке пăтаран;
Хытă тытаҫ пулмалла
Хăй арăмне Тăхтаман.

* * *

Ҫипер аҫа Сентти пур,
Ҫупса ҫӳрет урамра.
Кĕвентине утланса
Аҫа выҫаҫ лашалла.
Аслă урам тăрштĕпе
Ҫиксĕр тусан кăлараҫ,
Хура ҫикан пек хура
Каҫпа килне таврăнаҫ.
Ҫипер аҫа Сентти пур,
Ҫупса килет лашипе.
Хăйĕн пĕҫĕк ҫĕлхипе
Пăкăлтатаҫ инкĕшпе.
Ҫĕнĕ ҫын та, Нарспи киҫ
Пĕрмайях văл хуйхăраҫ,
Пăйахăшĕн аҫине,
Сенттийе ҫеҫ йуратаҫ.

Ҫӗнӗ ҫынта, Нарспи кин
Пӗрмайах вӑл хуйхӑрат̆,
Сенттипе ҫеҫ калаҫса,
Хӑй хуйхине пусарат̆.
Ҫав-тӗр ырӑ аҫ̌ана
Турӑ ҫ̌унне панӑ ҫав,
Кулса-сиксе выҫ̌ама
Кайӑк ҫ̌унӗ йанӑ ҫав.
Ҫиҫ̌ӗ ҫулхи аҫ̌ара
Ҫ̌ӑваш ҫ̌унӗ ларат̆ ҫав:
Пӗҫ̌ӗк куҫӗ йӗрсен те,
Йӑваш тути кулат̆ ҫав.
Ҫ̌ипер аҫ̌а Сентти пур,
Инкӗш патне ӑнтӑлат̆:
Хӑйӗн пӗҫ̌ӗк ҫ̌ӗлхипе
Инкӗшне вӑл йӑпатат̆:
„Ан йӗр, инкем, ан йӗрсем,
Тутӑрпала шӑл куҫна.
Ан хуйхӑрсам, инкеҫӗм,
Хӑваласам хуйхӑна“.

* *
*

Ырӑ кӗрӳ Тӑхтаман
Туй кӗлетне астӑват̆:



Ан хуйхӑрсам, инкеҫӗм,
Хӑваласам хуйхӑна.

Куллен кунах арăмне
Саламатпа кастарат.
Мĕскĕн арăмĕ тӳсет
Асапсене ҫĕнмесĕр.
Ухмах упăшка хĕнет
Мĕн пуласне пĕлмесĕр.
Пĕрре пĕр ҫын килҫĕ те,
Тăхтаманпа калаҫрĕҫ,
Нарспи пӳртре ҫук ҫухне
Пăшăл-пăшăл калаҫрĕҫ.
Нарспи кĕҫĕ сăрапа,
Леш хăнана ĕҫтерет.
Хăна тухса кайсанах, —
Саламаҫĕ вĕрентет:
Есĕ апла хĕр иккен,
Есĕ апла Сетнерпе
Тарнă мĕн-ха вăрмана
Туйна тунă ҫĕртенех!
Хĕнет, хĕнет Тăхтаман,
Тĕрлĕ асап кăтартат.
Йалти ҫынсем хушшинҫе
Текех сăмах сарăлат.
Ҫапли-капли ҫавă ҫав:
Ун пек нумай тĕнҫере,



Ырӑ кӗрӳ Тӑхтаман куллен кунах арӑмне саламатпа кастарать.

Ҫылай усал ӗҫ пулаҫ
Вӑрттӑн ҫӗрте тӗттӗмре.
Атте-анне хӑй хӗрне
Йуратса ҫеҫ ӳстерет.
Хӗртен арӑм пулсассӑн,
Ват упӑшка кӳлешет.
Тупрӗ пуйан упӑшка
Атте-анне хӑй хӗрне,
Анҫах унта мӗн усси—
Йуратмасан пӗр-пӗрне?
Тату, ырӑ килӗшсе
Иккӗш пӗрле пурӑнсан,
Ҫӗр хут ытла телейлӗ
Йурлӑ ҫын та пуйанран...
Хӗне-хӗне, Тӑхтаман,
Ҫунне кӑлар унӑнне.
Асаплантар, Тӑхтаман,
Хурсам йытӑ вырӑнне!
Хӗне-хӗне, Тӑхтаман,
Санран ҫамрӑк ан култӑр!
Асаплантар, Тӑхтаман,
Нарспи ҫасрах ватӑлтӑр!
Анҫах кайран хӑвӑнах
Ӳкӗнмелле ан пулгӑр...

Хӗне-хӗне, Тӑхтаман,
—Санран ҫамрӑк ан култӑр!—
Иртсе кайрӗ виҫ ерне
Ҫимӗк ерни хыҫӗнҫен,
Ват упӑшка хӗснине
Нарспи тӳсрӗ ҫавӑнҫҫен.
Анҫах тепӗр ернинҫе,
Пӗрре уйар ырӑ каҫ...
(Ҫим-ха, кӑна калама
Вӑхӑтсӑрах йурамасӑ).

## НАРСПИ ЕҪӖ

Хӗвел тухаӑ, улӑхаӑ
Ҫӳлӗ тусем тӑррине;
Хӑй ҫутгипе ӑшӑтаӑ
Тасти-тасти ҫӗрсене.
Ҫак ҫуллахи ырӑ кун
Хушӑлкана та саваӑ.
Пур тӗнҫери ҫӗрӗ ҫун
Ташлаӑ, сикет, савӑнаӑ.
Йаҫӗҫ йурӑ йурласа
Сӗм вӑрманти кайӑксем.
Акӑшсем шек йарӑнса

Анҫӗҫ шыва сар хӗрсем.
Анҫах ака шура пӳрт —
Пӗр саса та илтӗнмест.
Шура пӳртре ҫӗнӗ ҫын
Ларать, пуҫне ҫӗклемест.
Ирех хырам тӑрантса
Кайрӗ хире Тӑхтаман.
Пуҫне ҫиксе, хуйхӑрса
Ларать арӑмӗ пайан:
„Арӑм пултӑм ирӗксӗр
Атте-анне хушнипе.
Анҫах хӗрӗр мӗскӗнӗр
Ыра курмасть каҫҫипе.
Хӗрхенмесӗр хӗрӗре
Ҫиҫӗ йутӑн аллине,
Ҫиҫӗ йута, йут ҫӗре
Парса йатӑр мӗскӗне.
Халӗ хӗрӗр мӗскӗнӗр
Асап курса пурӑнать:
Ӑна ватӑ упӑшки
Йытӑ вырӑнне хурать.
Мӗншӗн мана савнинҫен
Ҫаплах йатӑр уйӑрса?
Мӗншӗн кунта килиҫҫен,

Çимерĕм-ши хам пуçа?
Мĕншĕн хайар тăшманпа
Ман пĕр çуртра пурăнас?
Пĕтес мар-ши пуçăмпа?
Йепле тÿссе пурăнас!?
— Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Пулмарĕ-çке ырлăха.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха.
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Савăнăç çук ку тĕнҫен.
Атте-анне ăссăртан
Савни йулҫĕ пĕр-пĕҫҫен.
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Йатăм çĕрҫĕ тахçанах.
Атте-анне ăссăртан
Пулҫĕ асапăм анҫах.
Манăн пурăнăç хĕн-хур
Атте-анне ăссăртан.
Капла пурăнса мĕн пур?
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Пулмарĕ-çке ырлăха,
Атте-анне ăссăрри—
Ырлăха мар, хурлăха.

— Анҫах манăн савни пур—
Ҫăлаймĕ-шим вăл мана?
Унăн вăйлă аллисем
Пĕтермĕҫ-шим тăшмана?
Ҫук, пуҫăма ҫийиҫҫен
Тăшманăма пĕтерем,
Асапланса тӳсиҫҫен
Тăхтамана... вĕлерем.
Анҫах вăйăм ҫитĕ-ши?!
Йепле кунтан ҫăлăнас?
Ей, пӳлĕхҫĕм, пулăшсам!
Ҫунăм ҫунаť, мĕн тăвас?..
Пĕтсен пĕтем, пĕт, тăшман—
Пурăнăҫăм ырах мар.
Наркăмăшăм, ес пайан
Хăвăн ĕҫне туса пар!“
Ҫапла пайан пӳртĕнҫе
Нарспи мĕскĕн хурланаť;
Ҫунĕ вĕркет, пуҫĕнҫе
Усал шухăш хускалаť.

* *
*

Вут пек хĕвел выҫаса
Ҫӳл тӳпине хăпараť.

Хуллен хуллен йаранса
Кăнтăрлана сулăнаҫ.
Тулта тĕнҫе хĕпĕртет,
Тулта тĕнҫе йалтăраҫ.
Нарспи пӳртĕнҫе йĕрет
Унăн ҫĕри ҫурăлаҫ.
Сентти килет сиктерсе,
Кĕвентине утланса.
Инкĕш патне ҫĕмĕрсе,
Кĕрсе кайрĕ ахăрса.
Ҫапаҫ паттăр „лашине“
Хăй аллинҫи хуллипе
Ăнсăртранах инкĕшке
Тапса илет урипе.
Анҫах вăл та выҫама
Аптăрарĕ инкĕшпе,
Аптăраса урама
Тухса кайрĕ „лашипе“.

* *
*

Вĕрет, сураҫ сарă кин
Хăй йашкине пăтратса,
Хуран айĕ ҫĕлен пек

Çунаҫ вуђӗ йавӑнса:
„Çитмӗл тинӗс леш йенђен
Килет карђӑк Шапатан,
Вӗр, сур, карђӑк, йашкана —
Пӗттӗр усал Тӑхтаман;
Утмӑл тинӗс уттинђе
Лараҫ, сикет йӗс пукан,
Сикех-сикех, йӗс пукан, —
Пӗттӗр усал Тӑхтаман!
Вӑтӑр та пӗр ту çинђе
Йӗс хуранра пиç йашка,
Çав йашкара пиç çӗлен,
Пиç тамӑкра упӑшка!“
Вӗрет, сураҫ сарӑ кин
Хӑй йашкине пӑтратса,
Вилӗм йашки вӗрет-çке
Çӗлен пекех ђашласа.

* *
*

Каç пулсассӑн упӑшки
Килђӗ хиртен çаврӑнса.
Сӗтел çиййӗнђе йашки
Лараҫ пӑсне кӑларса.



— „Йашка туглă, çи ларса!“

Кашăк илҫĕ Тăхтаман,
Ларҫĕ сĕтел хушшине.
— „Йашка тутлă-çке пайан“,
Тесе мухтаҫ йашкине;
Усал куçпа çавăрса,
Кăтартаҫ вăл ҫăмăрне:
„Йашка тутлă, çи ларса!“
Кăшкăраҫ вăл арăмне.
— „Сиҫĕп-çке-ха кайран та,
Пит çийессĕмех килмест“.
Ах, Нарспийĕ çавăнта
Тухса кайаҫ, тӳсеймест.
Тулта лараҫ куççӳлне
Тăпра çине йухтарса,
Пӳртри çийет йашкине
Урлă-пирлĕ тайăлса.

* *
*

Çийех, çийех, Тăхтаман,
Наркăмăшлă йашкана—
Ĕнтĕ есĕ малашне
Упăшка мар арăмна.
Пĕтрĕн ĕнтĕ, Тăхтаман,

Çутă тĕнҫе санăн мар!..
— „Нарспи, ҫасрах кĕр пӳрте!
Йăхă килет, вырăн сар!
Ака турăм, ĕтлентĕм,
Ăшăм ҫунаҫ ҫавтерех.
Йашка хыҫҫăн шыв ĕҫрĕм
Туйĕнҫĕ ерех пекех“.
Нарспи кĕҫĕ итлесе,
Çĕрте лараҫ упăшки:
Пĕтĕм ăшне-ҫиккине
Çураҫ хăватлă йашки.
Арăм сарҫĕ вырăнне,
Упăшкине вырттарҫĕ.
Çĕкле-ҫĕкле ҫапрĕ те,
Ҫунĕ ӳтне хăварҫĕ.
Пĕтрĕ пĕр ҫун тĕнҫере,
Ĕҫĕсемшĕн хупланҫĕ.
Пĕтрĕ ҫăваш ĕмĕрĕ,
Унăн ҫĕри лăпланҫĕ.
Пӳртри сĕтел-пукансем
Хăратаҫҫĕ арăмне,
Пайтах пăхрĕҫ шеллесе
Хуҫин сивĕ виллине;
Анҫах ҫĕрле пулҫĕ те,

Сĕм хупларĕ пӳрт ăшне;
Хăйĕн вăрăм аллипе
Хăратаҭ вăл Нарспийе.
Пĕгрĕ ţăваш ĕмĕрĕ,
Вырăн çинţен тăрас çук,
Выçă выţăх-ţĕрлĕхне
Тăрса апат парас çук.
Выçă ака лашисем
Кĕçенеççĕ картара,
Анţах есир, тăлăхсем,
Курассăр çук хуçăра!

* * *

Йал вĕçĕнţе сĕм вăрман
Ţăшăлтатаҭ çулçипе.
Хушка çăлтăр выţатаҭ
Çӳл тӳпере çуттипе.
Хушăлкари ţăвашсем
Çывăраççĕ харлатса.
Акартинţи тăмана
Анţах вĕçет ухлатса.
Уйăх кукри йаранса
Тухрĕ вăрман хыçĕнţен.

Шăппăн-шăппăн çеç утса
Тухрĕ Нарспи пÿртĕнҫен.
Кайрĕ мĕлке пек шуса
Анкартисем хыçнелле.
Йалтан тухрĕ, ыткăнса
Ҫупрĕ вăрман ăшнелле.
Курас тесе ăнтăлса
Уйăх ҫупрĕ тахçанҫен,
Вăрман анҫах шавласа
Йулҫĕ Нарспи хыçĕнҫен.
— Нарспи пырать вăрманпа
Темшĕн ытла ыткăнса.
Шăппăн тăрать сĕм вăрман,
Нарспи ҫунне хăратса
Армак-ҫармак йăвăçсем
Пуçĕсемпе суллаççĕ,
Нарспи иртсе пынă ҫух,
Çулне пÿлсе тăраççĕ.
Ват йывăçсем хушшинҫе
Арçурисем выҫаççĕ,
Нарспи иртсе пынă ҫух,
Аллисене тăсаççĕ.
Сасартăках çил тухса
Асрĕ кайрĕ сĕм вăрман,

Йĕри тавра ахăрат̆:
„Тыт арăмна, Тăхтаман!
Тыт арăмна, упăшка,
Тарат̆ усал арăму!“
Вăтăр та пĕр шуйттан пек,
Вăрман улат̆: у-у-у!

* * *

Ирех тăрса тумланса
Сентти тухрĕ выђама,
Кĕвентине утланса
Ђупрĕ инкĕшне курма.
Анђах инкĕш курăнмаст̆,
Пиђђĕш хађ те ҫывăрат̆,
Тăратса та вăранмаст̆:
Сентти шăпах аптăрат̆.
Пĕр ҫын килсе кĕђĕ те
Хытса кайрĕ вырăнтах;
Пăхса тăђĕ-тăђĕ те,
Тухса кайрĕ ҫавăнтах.
Пăртак тăрсан, вăл кайсан,
Тулђĕ пӳрте тулли ҫын:
— Йепле вилнĕ Тăхтаман?

— Ăҫта кайнă Нарспи кин?
Ҫук, мĕн ҫухлĕ ыйтсан та
Сире виле калас ҫук.
Нарспи ҫӳрет вăрманта,
Есир ăна тупас ҫук.

## СИЛПИРЕ

Аслă Силпи йалĕнҫе
Хуллен шăвать пурăнăҫ.
Иртсе кайрĕҫ ҫимĕкри
Ырăлăхпа савăнăҫ.
Ҫăваш кĕпи улаҫа,
Хир варринҫе кăн-кăвак.
Ĕҫҫен ҫăваш вăкăр пек,
Йурла-йурла ĕҫ тăвать.
Тăрать ҫурăм-пуҫĕпе,
Ирех хире вăл тухать.
Кăшт-кăшт апат тăвать те,
Ҫутă ҫава вăл йăтать.
Уҫук хыҫҫăн ҫăвашсем
Айкашрĕҫĕ хирсенҫе:
Валем, купа, капансем
Ларҫĕҫ улăх варринҫе,

Çивђĕ çава вашлатрĕ
Çулман çаран çийĕнђе.
Пуçлă ыраш саралђĕ
Çеçен хирĕн хушшинђе.
Сăмах нумай йал çинђе
Çемçе ђĕлхе вĕçĕнђе.
Тĕрĕсси те пур-тăр çав
Йалти сăмах хушшинђе.
Силпире те етемсем:
— Нарспи, Тăхтаман, теççĕ.
Вĕсем тахçан Тăхтаман
Хайаррине пĕлеççĕ.
Михетертен шикленсе,
Вăрттăн çĕрте сăмахсем:
Пуçне ђиксе шеллесе,
Аптăраççĕ ђăвашсем.
Сетнер ађа çынсенђен
Çав сăмаха илтсенех,
Амăшĕнђен уйрăлса
Кайрĕ таçта пĕђђенех.
Çынсем хирте ĕçлесе
Каçпа килне килеççĕ,
Каçхи апат тунă ђух:
Нарспи, Сетнер, тейеççĕ.

* * *

Сетнер утрĕ пĕр-пĕҫҫен,
Кĕрсе кайрĕ вăрмана.
Нарспи асапне илтсе,
Вилĕм сунаҫ тăшмана:
„Тĕттĕм пулĕ, каç пулĕ
Тăшман патне çитиҫҫен—
Тăшман ҫĕри лăпланĕ
Хĕвел кусса тухиҫҫен.
Хĕвел тухĕ, çутатĕ,
Етем тăрĕ ăйăхран.
Тăшман анҫах вăранмĕ
Ăйхи ытла йывăртан.
Хĕвел тухĕ çутатĕ,
Епĕ пулăп вăрманта.
Тăшман, выртăн хускалмăн,
Нарспи пулмĕ çуртăнта“.
Анҫах Нарспи унсăрах
Кĕçĕр тухрĕ килĕнҫен.
Хăйех тарҫĕ тăшманран
Савни пырса çитиҫҫен.

## ВĂРМАНТА

Шавлаҫ, кашлаҫ сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасҫ.
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан,
Ђарăнассăн туйăнмасҫ.
Шавлаҫ, кашлаҫ сĕм вăрман,
Тамăкри пек ахăраҫ.
Те арçури те шуйттан
Çав терийех ашкăнаҫ.
Тапхăр-тапхăр çил килет
Пăлтăр-пăлтăр савăрса.
Тĕттĕм вăрман ӯхĕрет
Çĕре çитех авăнса.
Хура пĕлĕт пĕрмайах
Шăваҫ вăрман тăрринђе,
Йараҫ çиçĕм çĕр çурсах
Хура пĕлĕт хушшинђе.
Аçа çапаҫ, шартлатаҫ,
Пĕтĕм тĕнђе кисренет.
Çумăр çырма пек йухаҫ,
Лупашкасенђе кĕрлет.
Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?



„Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?“

Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн ҫуна хăрататăн?
Вăрман тата хытăрах
Шавлать, йĕрет, ахăрать.
Турă ҫырлах ан пăрах!
Ахăр саман хускалать!
Ах, ҫылăхлă пуҫăма
Ăҫта ҫиксе хурам-ши?
Ах, ҫылăхлă ҫунăма
Йепле тытса ҫарам-ши?..
Йепле Сетнер мĕскĕн-ҫке
Урнă вăрман ăшĕнҫе.
Йепле ҫирĕп йăвăҫсем
Йурлаҫҫĕ пуҫ тăрринҫе.
Вăрман хĕсĕк ҫулĕпе
Ăш ҫуннине пусарса,
Вăрман шавне хуплас пек,
Пырать Сетнер йурласа:
„Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн ҫуна хăрататăн?
Ах, ман хуйхăм, итле-ха:
Мĕншĕн мана ҫунтаратăн?

Мĕншĕн мана тăлăха
Савăнăça мантаратăн?
Çуралтăм мĕн аннерен
Хĕн-хур, асап курма çеç.
Çав асапран, хĕнлĕхрен
Çамрăк пуçăм пĕтни çеç.
Çамрăк пуçăм пĕтмĕђђĕ,
Мулăм çукки пĕтерђĕ.
Вăл та пулин йурĕђђĕ,
Çын ухмаххи пĕтерђĕ.
Çын ухмаххи йурĕђђĕ,
Усал тăшман тупăнђĕ,
Усал тăшман пĕтĕђђĕ,
Турă çырни курăнђĕ“.
Сетнер йурлай йуррине,
Вăйлă тăвăл тапранса,
Сетнер йуррине илсе
Вĕçет йĕрсе, ахăрса,
Çав хуйхăллă сасăсем
Ђуна çурса йĕреççĕ,
Вăйлă тăвăлпа пĕрле
Таçта çитех çитеççĕ,
Хура вăрман ăшĕнђе
Хуллен-хуллен пĕтеççĕ.

Ҫав йурӑри куҫҫӳлсем
Пӗр ђун патне ҫитеҫҫӗ.
Таҫтан-таҫтан айакран
Тепри хирӗҫ макӑрать,
Усал асап-хуйхӑран
Унта тепӗр ђун ҫунать.
Такам йуррин сассисем
Кӗрет Сетнер хӑлхине.
Вӑйлӑ тӑвӑлпа пӗрле
Йурлать Сетнер йуррине:
„Хура вӑрман, сӗм вӑрман,
Мӗншӗн хытӑ шавлатӑн?
Савни пекех йурласа
Вилнӗ ђуна вӑрататӑн?
Тӗттӗм вӑрман, сӗм вӑрман
Ан ултала тӑлӑха.
Савни пекех йурласа
Ан хӑварсам хурлӑха.
Аслӑ вӑрман, сӗм вӑрман,
Мана ђӑнне кала-ха!
Мӗскӗн ђуна шеллесе
Ђун савнине кӑтарт-ха.
Анђах утать кунталла
Ман пата!ла хӗрарӑм;



... Нарспи, Нарспи, есё-им?

Ырă турă, çырлахсам!
Нарспи, Нарспи, есĕм?"

* * *

Икĕ савни пĕрлешсен,
Пуçне тайрĕ ват йуман.
Пĕр-ик тапхăр çил вĕрсен,
Шăп лăпланђĕ сĕм вăрман.
Хура пĕлĕт саланса
Пĕтрĕ вăрман хыçĕнђе,
Хĕвел пăхаť шăратса,
Кайăк йурлаť йăвинђе.
Курăк çинђи сывлăма
Хĕвел параť ăшшине.
Икĕ ђуна савăшма
Хĕвел параť çуттине.
Йăлтăртатаť ырă кун,
Усал кунăн мĕн ĕç пур?
Савăнса утаť икĕ ђун,
Çиђĕ йутăн мĕн ĕç пур?
Анђах вăрман ăшĕнђе
Хура кайăк ђăйлатаť:
Ах, Тăхтаман, Тăхтаман,
Нарспи ђунне вăл шыраť.

# АТТЕ-АННЕ

Сетнер пӗђӗк пӳртӗнђе
Вӗсем иккӗш ларасҫӗ.
Лутра сӗтел хушшинђе
Касхи апат тӑвасҫӗ.
Сетнер ватӑ амӑшӗ
Турӑх тупрӗ кӳршӗрен,
Ҫӑкӑр-тӑвар кӑларса
Хуђӗ сӗтел ӑшӗнђен.
Апатланса икӗ ђун
Хӗрӳ сӑмах каласай.
Ватӑ карђӑк-амӑшӗ
Шӑппӑн итлесе лараӗ.
Асӑнасҫӗ ӗлӗкхи
Ырӑ лӑпкӑ пурӑнӑсне,
Касхи вӑйӑ-улаха,
Ҫимӗкђенхи кунсене.
Сасартӑках илтӗнђӗ
Ура сасси пӑлтӑртан
Михетерпе карђӑкӗ
Килђӗс кӗђӗс алӑкран.

Карҫӑк:

Пирӗн Нарспи ку пу́ртре
Ҫук-ши тесе килтӗмӗр.
Йалти ырӑ ҫынсенҫен
Кунта тесе илтрӗмӗр.

Михетер:

Ех, хӗр, хӗ-ӗр, хӗр-и ес!
Нарспи, мӗскер хӑтлантӑн?
Йепле ҫынсен умӗнҫе
Ҫак намӑса кӑтартрӑн?
Мӗн ҫитмерӗ-ши сана,
Мӗн ҫитмерӗ тӗнҫере?
Мӗншӗн, хӗрӗм, мӗн пуртан,
Йурататӑн Сетнере?
Пайан хӗрӗ пуҫупа
Мӗншӗн ҫапла хӑтлантӑн?
Ӗмӗр курман намӑса
Ват пуҫӑма кӑтартрӑн?..

Карҫӑк·

Мӗн ҫитмен-ши ухмаха,
Упӑшкине вӗлерме,



„Пирĕн Нарспи ку пӳртре
ҫук-ши тесе килтĕмĕр“.

Çак Сетнерпе вăрманта
Лапăштатса çÿреме?

Михетер:

Турра шĕкĕр,—халиҫҫен
Усал сăмах илтменҫĕ,
Çак тарана çитиҫҫен
Киремет те тивменҫĕ,
Манăн килĕм-çуртăма
Ырă пирĕшти пăхаҫҫĕ,
Ырă пирĕшти пăхнипе
Йалта йатăм кайманҫҫĕ,
Пÿлĕх, хăрпан, çуттĕнҫе
Мана савса тăраҫҫĕç,
Кăвак-хуппи, çут хĕвел
Мана тупăш параҫҫĕç.
Çак тарана çитрĕм те,
Ватă пуçăм усăнҫĕ.
Есĕ çапла пулнипе
Ырă кунăм пăсăлҫĕ...

Карҫăк (Михетере):

Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:

Ĕçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне!

Михетер:

Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм,
Хĕр кăмăлне татмарăм.
Савнă хĕршĕн пуйанлăх
Кунĕн-çĕрĕн пуçтартăм.
Кăнтăрла та, çĕрле те
Канлĕ ăйхă курмарăм.
Хĕрĕмшĕнех тăрăшса
Куçăмсене хупмарăм.
Йепле каҫҫа парап-ши,
Тесе йалан шутларăм.
Хĕр телейшĕн тăрăшса
Пуйан каҫҫă шырарăм.
Каҫҫа патăм, туй турăм,
Пайан акă мĕн çитрĕ,
Манăн вăтă пуçăма
Пайан акă мĕн çирĕ!

Карҫăк:

Шеллеместĕн аннӳне,
Ах, çĕр çăтманă пуçна!

Камăн хĕрĕ пултăн-ши
Кам ӳстерҫĕ-ши сана?

Михетер:

Мĕн кĕҫĕнрен ӳстертĕм
Питне пăхса савăнма.
Ҫак тарана ҫитрĕм те,
Хĕрĕм ҫирĕ пуҫăма.
Аҫу-аннӳ ирĕкĕ
Пулҫĕ ҫĕрĕ вырăнне.
Пĕр Сетнершĕн тăктартăн
Аҫу-аннӳн шур ҫӳҫне.
Пулăшмарĕ пуйанлăх,
Пулăшмарĕ сăмах та.
Пуйан каҫҫă ҫумĕнҫе
Апла пулмĕ ухмах та.

Нарспи:

Еп, аттеҫĕм, ҫамрăк ҫун,
Мĕншĕн патăр хĕрĕре?
Пуйанлăхра анҫах мар
Ыр курасси—ҫыннинҫе...

Амăшĕ:

Йе-йе, усал, ытлашши
Ан кар ĕнтĕ çăварна,
Аннÿн ăшне çунтаратăн
Турăран килешшĕ пуçна!

Михетер:

Çак намăса кăтартрăн,—
Йалти сынсем мĕн калĕç?
Хĕрне ан ман ват супнă!—
Аçу çине кăтартĕç.
Анţах йалти çăварсем
Кирек те мĕн калаçţăр,
Йату çĕрнĕ пулсан та
Çапах есĕ манăн хĕр.
Аĭа, хĕрĕм таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пÿртрен.
Тепрер каţţă тупăпăр
Йату çĕрсех кайиţţен.
Аĭа, Нарспи, ан хуйхăр:
Санăн аçу пур вĕт-ха.
Йату пĕтнĕ пулсан та,
Аçун мулĕ пур вĕт-ха.

Карҫӑк:

Аҫа, йытӑ, хӑвӑртрах,
Пӗртте мана пӑхмастӑн.
Сетнер, йытӑ, кӗҫе пит,
Пуйан хӗрне ан хапсӑн!

Нарспи:

Ей аттеҫӗм, аттеҫӗм,
Мӗншӗн мана ҫийетӗн?
Намӑс кӳнӗ хӗрӗре
Хӑвӑн патна ҫӗнетӗн?..

Карҫӑк:

Ав, тата мӗн калаҫаҫ!
Савнӑ хӗрне итле-ха!

Михетер:

Ҫитӗ, карҫӑк, вулама,
Хӗр сӑмахне илтер-ха.

Нарспи:

Арӑм пулнӑ пуҫӑмпа
Киле пырса тӑрӑп-и?

Савман каҫҫа кайсассăн,
Татах асап ҫăтăп-и?
Ҫук, ҫук, атте, ан ҫĕн те!
Хаҫ тин киле пыраймăп.
Ҫапла пулса пĕтсен тин,
Каҫҫă кĕтсе лараймăп,
— Есир мана ӳстертĕр,
Аҫа ҫухне йуратрăр,
Анҫах ӳссе ҫитрĕм те,
Хĕрĕр ҫунне курмарăр.
Епĕ сире кĕлтурăм,
Епĕ сире йăлăнтăм;
Вĕҫне ҫите пуҫласан,
Йăвалланса макăртăм.
Анҫах есир хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр,
Ӳстертĕр те, укҫашăн
Сутса йарса пĕтертĕр.
Аҫа ҫухне хĕрĕре
Йурататпăр, теттĕрҫĕ,
Савнă хĕрĕр мĕн ыйтнă
Ăна пур те хатĕрҫĕ.
Ӳссе ҫитрĕм, аттене
Пĕр ҫул кĕт-ха, терĕм те,

Атте вăрçса пĕтерḝ,
Анне çӳçрен сĕтĕрḝ.
Мĕншĕн манăн кăмăла,
Çав йулашки кăмăла
Тумарăн-ши, аттеçĕм?
Хаҕ пулмăттăм каплалла.
Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса йатăн кашкăра?
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕн пурĕ те укçара...
Епĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, епĕ мар.
Сетнер кĕрӳ пулмасан,
Епĕ сирĕн хĕрĕр мар.
Ей, аттеçĕм, аннеçĕм,
Сетнерпеле пехиллĕр—
Çавăн ҕухне тин вара
Ĕмĕр пĕрле пулăпăр.

Карҕăк:

Ав-ав хĕрӳ мĕн калаӳ—
Сетнер, шуйттан, илĕртнĕ.
И-и, Михетер, кайар-ха,
Хĕрӳ çине сур ĕнтĕ!

Михетер:

Ы-ых, Сетнер, астăвăн:
Манăн хĕре ес çирĕн!
Есĕ, çав-тĕр усал хĕр,
Хура пӳртрех тиц, еппин!
Аçу килне, ҫим халĕ,
Хăвах ҫупса пырăн-ха,
Аçу мĕнле ыррине
Çавăн ҫухне курăн-ха.
Аҭа, ватă карҫăкăм,
Кайар ĕнтĕ килелле.
Ĕнтĕ сăмах пĕтрĕ пулĕ
Пайан пирĕн хĕрпеле!

Карҫăк:

Типĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр, хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриҫҫен
Асапланăр йытă пек!—
Тухса кайрĕç ылханса
Ашшĕ-амăш хăй хĕрне.
Урам тăрăх карҫăкĕ
Çаптараҭ хăй сăмахне.

Намăсланса хĕрелсе
Хĕвел анҫĕ, пытанҫĕ.
Сетнер амăш ахлатса
Сĕтел çине пуçтарҫĕ.

## ТĂВĂТА ВИЛĖ

Йывăр ĕçсем хыçĕнҫен
Ăйхă темрен те паха:
Силпи йалĕн çыннисем
Кайрĕç тутлă ăйăха.
Çывăраççĕ етемсем.
Хура вăрман тĕк тăрать,
Тăрсан-тăрсан ҫашласа
Çил вĕрнипе вăранать...
Килсе тухрĕç вăрмантан
Акă икĕ урапа.
Щăппăн шурĕç йалалла
Парăн-парăн лашапа...
Акă сасă илтĕнет,
Ҫуна çурса йан йарать.
Авă сасса илтнĕ те,
Пĕр çын урампа ҫупать...
Шăлтăр-шалтăр ташласа

Урапасем кустарђӗҫ.
Вӑрман ӑшне кустарса
Кӗрсе кайрӗҫ, ҫухалђӗҫ...

* * *

Шӑри-шари ҫын шавлаҫ,
Урам тӑрӑх ђупкалаҫ,
— Михетере ҫаратнӑ!—
Тесе пӗри кӑшкӑраҫ.
Пур те тури кассалла
Хашка-хашка ђупаҫҫӗ.
Мӗн пулнӑ та, мӗн пулнӑ?—
Пӗр пӗринђен ыйтаҫҫӗ.
— „Михетере ҫаратнӑ,
Пӗр йапала хӑварман!
Ҫӗр ҫӑтманӑ вӑрӑсем
Турӑран та хӑраман:
Михетерпе карђӑкне
Иккӗшне те вӗлернӗ!
Ҫиђӗ тарҫи-тӗрҫине
Ерех парса ӳсӗртнӗ.
Сетпер ђупса ҫитнӗ мӗн
Илтсе карђӑк сассине,



— „Михетере ҫаратнӑ,
Пӗр йапала хӑварман!

Вăрă, шуйттан пурттипе
Пуçнех çурнă унăнне!“
Михетере вĕлернĕ,
Мулне-мĕнне хăварман.
Сĕмсĕр-пуçсăр вăррисем
Турăран та хăраман!
Пĕтнĕ мĕскĕн Сетнер те
Усал вăрă пурттинҫен.
Кун пек усал ĕç курман
Силпи йалĕ халиҫҫен.
Михетерĕн Нарспийĕ
Пĕр куççўл те йухтармасть:
Ашшĕн пушă килĕнҫе
Вырăнтан та хускалмасть;
Кăтăр-кăтар арман ҫулĕ
Ҫĕри çинҫе аварать,
Арман ҫулĕ айĕнҫе
Мĕскĕн ҫĕре çурăлать.
Ах çурăлса кайрĕ те,
Нарспи кайрĕ йăванса:
Тин ăн килсе кĕҫĕ те,
Йĕрсе йаҫĕ кăшкăрса:
„Ей аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн мана çуратрăр?

Тӗнҫе асапне курма
Кун ҫуттине кӑтартрӑр.
Ей турӑҫӑм пӳлӗхҫӗм,
Мӗншӗн мана ҫун патӑн?
Мӗскӗн ҫамрӑк пуҫӑма
Пӗр телей те йамарӑн.
Ей ҫунӑмҫӑм, ҫамрӑк пуҫ,
Мӗншӗн капла пултӑн-ши?
Пӗтӗм тӗнҫе хушшинҫе
Есӗ пултӑн ытлашши".
Йӗре-йӗре хуйхӑрса
Нарспи утрӗ хирелле.
Йалтан тухрӗ уттарҫӗ
Кантӑр-варӗ йеннелле.
Йалти сынсем шеллесе
Пӑхса йулҫӗҫ хыҫӗнҫен.
Пайан пулнӑ ӗҫ ҫинҫен
Пакӑлтатрӗҫ тӗттӗмҫҫен.

* * *

Тепӗр кунне ирхине
Ҫӑваш хире тухмарӗ.
Ерне куна асӑнса

Нимĕн ĕç те тумарĕ.
Ĕлĕкхи пек урама
Сарă хĕрсем тухмарĕç.
Вăйă ташшисем ташлама
Каҫҫисем те хăймарĕç.
Тĕрлĕ çĕрте ваттисем
Ушкăн-ушкăн тăраççĕ;
Михетерĕн кил-çуртне
Сутма канаш тăваççĕ.
Нарспи таçта кайнăран
Йаҫĕç ăна шырама.
Михетерпе карҫăкне
Пурте утрĕç пытарма.
Аслă масар-хăйамат,
Виçĕ виле шăтăкра,
Ҫипер аҫа Сетнер те
Выртаҭ йуман тупăкра.

* *
*

Кăнтăрлапа пĕтĕм йал
Пĕççисене шарт çапаҭ:
Нарспи виллине тупса,
Нимĕн тума аптăраҭ.

Шыракансем таврăнçĕç
Лашисене çунтарса:
Кантăр-варта йăмраран
Вилнĕ терĕç çакăнса...
Вара вилнĕ вырăннех
Хуçĕç ăна пытарса,
Тăпри тавра шĕшкĕрен
Çатан лартрĕç çавăрса.
Хĕвел анçĕ, каç пулçĕ,
Çăваш çынни сывăрать.
Хĕвел тухрĕ, çутăлçĕ,
Çăваш ĕçе тытăнать.
Анçах пирĕн Нарспишĕн
Ĕмĕрлĕхе каç пулçĕ,
Ĕмĕр тĕттĕм тупăкра
Хуйхи-суйхи татăлçĕ.

* *
*

Çапла иртрĕ пурăнăç,
Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах.
Ашшĕ-амĕш ухмахран
Пĕтрĕ хуйхă - суйхăпах.
Курçĕ сутă тĕнçене

Пӳлех - турă пӳрнипе,
Ӳсрĕ, пулҭĕ сарă хĕр
Атте-анне пăхнипе.
Пӳлĕх - турран кăмăлĕ
Ăслă турĕ хăй хĕрне,
Атте-анне ирĕкĕ
Ҫирĕ сарă хĕр пуҫне.
Выртрĕ хĕсĕк тупăка,
Йаҭĕ йулҭĕ йал ҫинҭе.
Ун хурлăхлă йуррисем
Йулҭĕҫ ҫынсен ăсĕнҭе.
Хаԓте пулин Сиппире
Асăнаҫҫĕ мĕскĕне:
Йалан, ҫумăр ҫумасан,
Шыв сапаҫҫĕ тăприне.

# Тупмалли

*Стр.*

„Нарспи“ (умсăмах вырăнне) . . . . . 5
Силпи йалĕнҫе . . . . . . . . . . . 23
Сарă хĕр . . . . . . . . . . . 30
Ҫимĕк каҫĕ . . . . . . . . . . . . 38
Туй . . . . . . . . . . . . . . . 51
Йумăҫ патĕнҫе . . . . . . . . . . 57
Тарни . . . . . . . . . . . . . . 63
Икĕ туй . . . . . . . . . . . . . 73
Хушăлкара . . . . . . . . . . . 79
Ҫимĕк иртсен . . . . . . . . . . . 86
Нарспи ĕҫĕ . . . . . . . . . . . 93
Силпире . . . . . . . . . . . . . 105
Вăрманта . . . . . . . . . . . . 108
Атте-анне . . . . . . . . . . . . 115
Тăватă виле . . . . . . . . . . . 126

# СССР-ти Халăхсем Тĕп Истаттĕлстви

## Илемлĕ литтературă:

1. Н. Шупуççынни. Йеркĕн 1 т. 25 п.
2. Викторов. Йалти кĕвĕсем. 30 п.
3. Курак. Сăвăсем . . . . . 35 п.
4. Шаланкă. Ирхи сывлăм . 35 п.
5. Золотов. Çамрăк паттăрсем. 35 п.
6. Дорохов. Çĕнĕ пурнăç . . 12 п.
7. Орьев. Комсомолĕссем . . 35 п.
8. Краснов. Шуррисемпе çапăçни . . . . . . . . . . 45 п.
9. Данилов. Тайкара . . . . 12 п.
10. Викторов. Çырмара . . . 40 п.
11. Йунлă самана . . . . . . . 35 п.
12. Данилов. Калавсем . . . . 35 п.
13. Хусанкай. Хури. Çирĕм ултă . . . . . . . . . . . 15 п.
14. Талвир. Хĕллехи сивĕре . 25 п.

15. Пирён çул (МАПП ђăваш çексин аљманахĕ . . . . . 75 п.

16. Владимирский. Савăт ађи Микул . . . . . . . . . . . 15 п.

17. Касаткин. Çунат Петĕр . 12 п.

18. Перовская. Мишкă . . . 25 п.

19. Олейников. Влаç пирĕн алăра . . . . . . . . . . 20 п.

20. Неверов. Пĕђĕк ађасем ваљљи çырнă калавсем . . 40 п.

21. Полонская. Ђасси . . . 12 п.

22. Бианки. Кайăк çурђĕсем . 15 п.

---

**Кĕнекесене илме укçа çак атрĕссемпе йарăр:**

1. МОСКВА, Центр, Никольская 10. Торготдел Центриздата.

2. САМАРА, Советская, 76. Сред. Волжское отд. Центриздата.

Хакĕ 50 пус

Цена 50 коп.

На чувашском языке

К. ИВАНОВ

НАРСПИ

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР
Москва, центр, Никольская, 10.